24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
МАЙ
1
КĔҪНЕРНИКУН
102 (5817) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ.

ЧĂВАШ КОММУНИ

Сывă пултăр Майăн 1-мĕш—рабочи класăн революциллĕ вăйĕсен боевой смотрĕ!

КĔРЕШӲПЕ ҪĔНТЕРӲСЕН УЯВĔ

Паянхи кун — пĕтĕм тĕнчери ĕҫҫыннисен чаплă уявĕ.

Кăҫалхи çул çак уява пĕтĕм тĕнчери пролетариат империализмлă иккĕмĕш вăрҫă условийĕсенче кĕтсе илет. Империалистсем колонисене, чĕртавар рынăнĕсене, тавар вырнаçтармалли рынăнсене çĕнĕрен валеҫессишĕн пуçласа янă вăрҫă—пĕтĕм тĕнчери вăрҫă пулса тăчĕ. 1,5 миллиард çын халăха империалистсем вăрҫă вутне туртса кĕртрĕç. Çапах та вăрҫă вĕçĕ курăнмастьха, вăл сарăлсах пырать. Вăрҫă пушарĕнче государствăсем ишĕле-ишĕле анаççĕ, хуласене кисрентереççĕ. Юлашки вăхăтра вăрҫă вучĕ Балкан çурмаутравне хыпса илчĕ. Вăрҫă çил-тăвалĕ Европăра, Азире, Африкăра, çĕр çинче те, сывлăшра та тата океансемпе тинĕссем çинче те кĕрлесе тăрать.

Вăрҫа пула империалистсем пысăк услам илсе пуяççĕ. Империализмлă вăрҫăн йывăрлăхĕ пĕтĕмпех вăрҫа хутшăннă çĕршывсенчи ĕҫҫыннисем çине тиеннĕ. Вĕсем бомбăсемпе снарядсем тивнипе кăна мар, выçлăха тата чирчĕрсене пула вилеççĕ, ĕç тупаймасăр асапланаççĕ, эксплоатаци вăйланнине, налогсем ӳснине, продуктсем çитменнине тата продуктсен хакĕ ӳснине пула нуша тӳсеççĕ.

Англири предприятисенче рабочисене талăкра 10—14 сехет хушши ĕçлеттереççĕ. Çынсене пит нумай салтака илнĕ пулин те, Англире хальхи вăхăтра ĕç тупайманнисем миллионшар çын шутланаççĕ. Германире ĕç кунне 16 сехете çитерме ирĕк паракан закон кăларнă. Италире ĕҫҫыннисем çăкăр тата ытти продуктсем çитменнипе аптăраççĕ. Франции ĕҫҫыннисем вăрҫа пула хăрушă асапсем тӳсеççĕ. Унта миллионшар çынсем кил-çуртсăр тата нимĕнле пурлăхсăр тăрса юлнă. Çитменнине вĕсем халĕ те ĕç тупаймаççĕ. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче те, вĕсен промышленноҫĕ вăрҫă валли кунĕн-çĕрĕн ĕçлет пулин те, ĕç тупаймасăр тăракансем 10 миллион çын ытла шутланаççĕ.

Империализмлă вăрҫă, çапла вара, капиталистсене вĕçĕмсĕр пуйтарать, сав вăхăтрах ĕҫҫыннисем çине йывăр инкексемпе нушасем тиет.

Анчах капитализмлă çĕршывсенчи рабочисемпе ĕҫҫыннисем капитал пусмарне хирĕç кĕрешесси те ӳссех пырать. Ĕҫҫыннисем коммунистсен партийĕсем тавра, Коммунистла Интернационал ялавĕ тавра пĕтĕҫҫе пыраççĕ. Вĕсене аслă Совет Союзĕн примерĕ кĕрешӳре вăй-хăват тата шанчăк парса тăрать. Совет Союзĕнчи ĕҫҫыннисем паянхи кун класлă тăвансене, капитализмлă çĕршывсенчи рабочисемпе мĕнпур ĕҫҫыннисене, хĕрӳллĕн саламласа, пурте те пĕр шухăшлă пулса çапла калаççĕ:

«Сывă пултăр Коммунистла Интернационал — ĕҫҫыннисен çĕнтерĕвĕшĕн тăракан кĕрешӳ организаторĕ!»

ССР Союзĕнчи ĕҫҫыннисем кăҫалхи майăн 1-мĕшне те социализм строительствинче çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илеççĕ. Кăҫалхи çул Литва, Латви, Эстони Советлă Социализмлă Республикисенчи, Бессарабири тата Çурçĕр Буковинăри ĕҫҫыннисем майăн 1-мĕшне пирвайхи хут ирĕклĕн, Совет Союзĕн граждайĕсем пулса уявлаççĕ. Ку вăл Совет Союзĕн хăвачĕпе тĕрекĕ, социализмлă çĕршыври халăхсен тăванлă семьи ӳссе пынине кăтартса тăрать.

ССР Союзĕ, большевиксен партийĕ, пирĕн çулпуç аслă Сталин ертсе пынипе, çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ туса малалла кайса пырать. Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсемпе пĕрлех, Чăваш республикинчи ĕҫҫыннисем те майăн 1-мĕшне пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илеççĕ. Чăваш республикин промышленноҫĕпе ялхуçалăхĕ малаллах çĕкленсе пыни, халăхăн культурлăхĕ, формипе нациллĕ, содержанийĕпе социализмлă искусство чечекленсе ӳссе пыни,—çаксем пурте ленинла-сталинла наци политикин чаплă çĕнтерĕвĕсене кăтартса тăраççĕ.

Хальхи вăхăтра пирĕн тăван çĕршыври мĕнпур ĕҫҫыннисем ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ йышăннă решенисене пурнăҫа кĕртессишĕн пикенсе ĕçлеççĕ. 1941 çулта халăх хуçалăхне аталантармалли план тăрăх, ССР Союзĕн промышленноҫĕ кăҫалхи çул продукци туса кăларассине 162 миллиард тенкĕлĕхе çитермелле—иртнĕ çулхипе танлаштарсан, ӳсĕм 17—18 процент пулмалла. Çавăн пекех ялхуçалăхĕнче тĕштырăсем туса илесси 8 процент ӳсмелле. Хуçалăх малалла ӳснĕ никĕс çинче совет халăхĕн пурнăçĕ лайăхлансах пырать. Халăх хуçалăхĕн планне тултарни тата ирттерсе тултарни Совет Союзĕн оборона вăй-хăватне ӳстерет.

Совет правительствин сталинла ăслă политикине пула тата хăйĕн вăй-хăватне пула, ССР Союзĕ вăрҫă тулашĕнче тăрать. Анчах пирĕн тăван çĕршывăн та вăрҫă хăрушлăхĕ ӳснине шута илмесĕр тăма эпир пултараймастпăр. Çавăнпа ĕнтĕ пирĕн Совет Союзĕн оборона хăватне ывăнма пĕлмесĕр ӳстерсе пымалла.

Халăх хуçалăхне аталантармалли плана ăнăçлăн пурнăçа кĕртме кашни предприяти продукци туса кăларас плана, кашни колхоз тырпул тухăçлăхне, выльăх-чĕрлĕх хисепне тата вĕсен продуктивлăхне ӳстерес плана тултарса тата ирттерсе тултарса пымалла. Çавăнпа та кашни рабочи тата работница, кашни колхозник тата колхозница, кашни служащи—пурте харпăрхăй вырăнĕнче тăрăшса ĕçлени, ĕç нормисене тултарса тата ирттерсе тултарса пыни кирлĕ. Социализмлă ăмăртăва, стахановла движенине тата вăйлăнрах сарса пырас пулать.

Большевиксен партийĕ тавра, юратнă çулпуç Сталин юлташ тавра таччăн пĕтĕҫҫе тăракан совет халăхĕ, çул çинче тĕл пулакан мĕнпур йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, 1941 çулта та — сталинла виççĕмĕш пятилеткăн тăваттăмĕш çулĕнче—халăх хуçалăхĕн планне ăнăçлăн тултарĕ.

Майăн 1-мĕшĕнчи демонстрацире совет халăхĕ хăй Ленин—Сталин партине, халăхсен аслă çулпуçне Сталин юлташа вĕçĕмсĕр юратнине, социализмлă тăван çĕршывăн хуçалăхлă тата оборонăллă вăй-хăватне малалла ӳстерсе пыма хатĕр тăнине, ССР Союзĕнчи рабочи класс капитализмлă çĕршывсенчи рабочи класспа интернационаллă сыхăнусем тытассине малашне çирĕплетсе пыма хатĕррине тата малашне те çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳсем туса пыма хăватлăн ĕçлеме хатĕррине кăтартса парать.

Майăн 1-мĕш ячĕпе хамăрăн пĕтĕм ĕҫсене пăхса тухса, предприятисенче, колхоз уй-хирĕсенче, выльăх-чĕрлĕх фермисенче социализмла ăмăртса ĕçлессине, рабочисемпе колхозниксем хушшинчи стахановла движенине тата вăйлăнрах сарса пырар!

Сывă пултăр Майăн 1-мĕш—рабочи класăн революциллĕ вăйĕсен боевой смотрĕ!

Сывă пултăр Ленин—Сталин партийĕ тата пĕтĕм тĕнчери ĕҫҫыннисен çулпуçĕ, пирĕн учитель тата атте аслă Сталин!

Профсоюзсен производство ыйтăвĕсемпе куллен интересленмелле

Апрелĕн 28-мĕшĕнче, ВКП(б) Чăваш Обкомĕнче, профсоюз обкомĕсен, фабзавкомсен тата вырăнти комитетсен председательĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Вăл канашлăва ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Я. Павлов юлташ ирттерчĕ.

Канашлура потребкооперацин работниксен профсоюз обкомĕн председателĕ Шарапов, Çĕмĕрле комбинатĕнчи завком председателĕн заместителĕ Миронов, госучреждени суту-илу работникĕсен профсоюз обкомĕн председателĕ Афанасьев, политпросвет работникĕсен профсоюз обкомĕн председателĕ Макаревский т. ыт. юлташсем ВЦСПС XI пленумĕн решенине пурнăҫа кĕртес тĕлĕшпе мĕнле ĕçсем туса ирттерме палăртни çинчен каласа памаллачĕ. Анчах вĕсем ун çинчен сахал каларĕç. Профсоюзсен обкомĕсем чылайăшĕ партин XVIII конференцийĕн, ВЦСПС XI пленумĕн решенийĕсем çинчен профсоюз членĕсене ăнлантарса парас, вăл решенисене практикăллă ĕçре пурнăҫа кĕртес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ, вĕсем халĕ те «мероприятисем» палăртаççĕ. Тепирсем тата хăйсен çулти органĕсенчен «инструкцисем» килессе кĕтсе лараççĕ. Çак сăлтавсене пула ĕнтĕ профсоюзсем ВЦСПС XI пленумĕ хыççăн та производство ыйтăвĕсемне сахал интереслеççĕ.

ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Павлов юлташ ку ĕçре пысăк çитменлĕхсем пуррине уçса палăртрĕ.

ВЦСПС пленумĕ халăх хуçалăхĕн 1941 çулхи планне тултарас ĕçе хутшăнас тĕлĕшпе профсоюзсем умне конкретлă задачăсем кăларса тăратрĕ. Вăл задачăсене пурнăҫа кĕртес тесен вĕсем çинчен профсоюз членĕсен сарлака массисене ăнлантарса памалла, вăл решенисене союзăн кашни членĕ патне çитермелле.

Профсоюз членĕсене халăх-хуçалăх планĕ, унăн пĕлтерĕшĕ çинчен каласа пани кирлĕ. Çакна ăнланса илмелле: халăх хуçалăхĕн 1941 çулти планне тултарас тĕлĕшпе ĕçлесси вăл промышленноспа транспортри профсоюзсене çеç тивмест, пĕтĕм профсоюзсен ĕçĕ пулса тăрать. Апла пулсан ку ĕçрен пĕр профсоюз организаци те пăрăнса тăма пултараймасть.

Профсоюзсен обкомĕсем хăйсен ĕçĕсене çителĕксĕр урăхлатса çĕнетеççĕ, вĕсем вырăнти комитетсене начар ертсе пыраççĕ, производство ыйтăвĕсенчен аякра тăнă пирки уйрăм предприятисемпе учрежденисен ĕçне сахал пĕлеççĕ.

Профсоюзсен социализмлă ăмăртăва, производствăллă канашлусене ертсе пырас ĕçе тĕпренех лайăхлатмалла. Производствăллă канашлусенче ĕç тухăçлăхĕпе пахалăхне ӳстерме пулăшакан ыйтусене лартмалла, ĕç дисциплинине çирĕплетес, производствăра, учрежденисенче тасалăхпа йĕркелĕх туса хурас енĕпе ытларах ĕçлемлле. Пĕтĕм профсоюз массисен тимлĕхне производство ыйтăвĕсем енне çавăрмалла.

Вагонсем юсакан заводăн подсобнăй хуçалăхĕнче

Иртнĕ çулта организацийĕнĕ подсобнăй хуçалăх хăйĕн пирвайхи çимĕçĕсене пама пуçларĕ. Икĕ теплицăра сухан, хăяр ӳсет. Ку таринчен теплицăра ӳстернĕ сухана 1 тонна та 200 килограмм сутнă. Хăярсем май уйăхĕнче пиççе çитеççĕ. Теплицăсенчех завод валли чечексем акса хăварнă.

Кăҫал подсобнăй хуçалăхра тĕрлĕ пахча-çимĕçсем 32 гектар, сĕлĕ 48 гектар çине акса хăвармалла. Çĕрулми тата сĕлĕ вăрлăхĕсем, купăста, хăяр, помидор калчисем çителĕклĕ. Ялхуçалăх машинисене юсаса çитернĕ. Пилĕк лашана канма тăратнă. Суха тума тата акма МТ Станципе договор тунă. Хĕлле вăхăтра уя тислĕк, фекали 300 тоннăна яхăн кăларнă.

Çураки вăхăтĕнче подсобнăй хуçалăхра ĕçлеме заводри рабочисемпе служащисен, инженерпс-технически работниксен арăмĕсене явăçтарма палăртнă. Халĕ хĕрарăмсем хуçалăха пулăшма тытăнчĕç. Анчах та рабочисем кирлĕ чухлех пуласси çине шанма йывăр. Подсобнăй хуçалăх руководителĕсен ĕç вăйĕ пухассине вăраха хăварма юрамасть. Унтан та ытларах рабочисене агротехника йĕркисемпе паллаштарасси çине хытă çавăрăнса пăхмалла.

Пахча-çимĕçсене акса хăварнă хыççăн вĕсене хурт-кăпшанкăсем сиенлесси нчен сыхламалла. Халлĕхе çав тĕлĕшпе ним те туман. Тĕрлĕрен химикатсем çук. Хăçан пуласси те паллă мар.

Выльăх-чĕрлĕх туянасси тата строительство ĕçĕ начар. Подсобнăй хуçалăх 1940 çулти 4-мĕш тата кăҫалхи 1-мĕш кварталсенче панă ссудăсемпе пĕтĕмпех усă курман.

Заводăн Çавал шывĕ çинче пысăк плотина пур. Унта подсобнăй хуçалăх хуртăвакал ӳстерме пултарать. Çакăн çинчен хальтерех шутласа пăхмалла.

Заводри рабочисене хăйсем валли пахча-çимĕçсем акса тума 28 гектар çĕр уйăрса панă. Çак çĕр çине акса хăварма вăрлăхсем тупса хатĕрлемен, туртăм вăйĕ пирки те ыйтăва татса паман.

Подсобнăй хуçалăх ĕçĕпе ВКП(б) райкомĕ, республикăри ертсе пыракан организацисем интересленеççĕ. Вăл çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен райком тата Чăваш АССР Совнаркомĕ сӳтсе-явнă. Çав вăхăтрах заводри парторганизацинче унăн ĕçĕ çинчен пĕрре те сӳтсе-явман. Вăл çӳлти организацисем çине шанса тăрать пулас.

КАНАШ. (Хамăр корр.).

Облигацисене алла параççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Виççĕмĕш Пятилетка (виççĕмĕш çулти кăларăм) заем укçине районри служащисемпе колхозниксем тӳлесе тăрĕç. Районри организацисемпе учрежденисем заем облигацийĕсене подписчиксене валеҫсе пачĕç.

Перекет кассинсенче тата ялсоветсенче облигацисем тăрăх выляв тухнине тĕрĕслеççĕ. Районри перекет касси пĕрремĕш квартала 13.255 тенкĕ выляв укçи тӳленĕ. Райфора ĕçлекен Антонов юлташ 3000 тенкĕ выляса илнĕ.

П. МАЙОРОВ.

Майăн 1-мĕш ячĕпе пулнă савăнăçлă лару

Апрелĕн 30-мĕшĕнче Шупашкарта, Советсен çурчĕн ларусем пулакан залĕнче парти, совет, профсоюз тата комсомол организацийĕсен, хулари заводсемпе фабрикăсенчи стахановецсемпе пĕрле, пĕтĕм тĕнчери пролетарнатăн аслă уявĕ — Майăн 1-мĕш ячĕпе савăнăçлă лару пулса иртрĕ.

Савăнăçлă ларăва пухăннисем тăвăллăн алă çупса, пысăк хаваслăхпа хисеплĕ президиума халăхсен аслă çулпуçне **И. В. Сталин** юлташа, Совет правительстви пуçлăхне **В. М. Молотов** юлташа, **К. Е. Ворошилов, М. И. Калинин, Л. М. Каганович, А. А. Андреев, А. И. Микоян, А. А. Жданов, Н. С. Хрущев, Н. М. Шверник, Л. П. Берия, Н. А. Вознесенский, А. С. Щербаков, Г. М. Маленков** юлташсене суйларĕç.

Пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн аслă праздникĕ — Майăн 1-мĕш çинчен ВКП(б) горкомĕн секретарĕ **М. А. Андреев** юлташ доклад туса пачĕ.

Савăнăçлă лару пысăк çĕкленӳпе, тăвăллăн алă çупса пĕтĕм тĕнчери ĕҫсыннисен аслă çулпуçĕ, пролетариллĕ революцин гении Иосиф Виссарионович Сталин юлташ патне саламлă сыру яма йыштăнчĕ.

Савăнăçлă лару хыççăн концерт пулчĕ.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

Черевичный самолечĕ—Шмидт мысĕ çинче

Наукăллă сăнав ĕçĕсене туса пĕтернĕ тата вĕсене çĕкленмелли площадкăна тасатса çитернĕ хыççăн, инçетри широтасем çинчи сывлăш экспедицийĕн участникĕсем вĕçсе тухма хатĕрленсе çитнĕ. «СССР Н-169» самолетăн радисчĕ Макаров юлташ пăр çинчи лагерьте пурăнакансем Майăн пĕрремĕш ячĕпе яракан саламлă телеграммăсене панă.

Ыран апрелĕн 29-мĕш тенĕ чух çĕрле çакăн пек радиограмма илнĕ:

«Апрелĕн 28-мĕшĕнче Мускав вăхăчĕпе 23 сехет те 45 минутăра виçсĕмĕш номерлĕ пăр çинчен вĕçсе çĕклентĕмĕр, Врангель утравĕ çинелле çул тытрăмăр. Пурте йĕркеллĕ. Черевичный, Либин».

Вĕçсе пынă чух яланах самолет çинчен çул çинчи обстановка пирки кĕске цĕлтерӳсем парса пынă. Апрелĕн 29-мĕшĕнче 00 сехет те 55 минутăра Черевичныйпа Аккуратов радио тăрăх çапла пĕлтернĕ: самолет çурçĕр широтин 78 градусĕпе 30 минути, хĕвеланăç долготин 173 градусĕпе 15 минути тĕлĕнче вĕçсе пырать. Пĕр сехет хушши «СССР Н-169» самолет 10 баллă пăрсем тĕлĕнче вĕçсе пынă. Экипаж пăрсем хушшинчи шывлă ансăр, çӳхе пăрпа витĕнсе тăракан вырăнсене курнă. Тепĕр темиçе минутăран кăнтăрăнчи океана талккишпех çăра тĕтре хупăрласа илнĕ. Черевичный самолета талккишпех хупăрласа тăракан хура пĕлĕт çиййĕпе илсе пынă.

«Ирхине 3 сехет иртнĕ хыççăн 4 моторлă сывлăш карапĕ 75-мĕш параллель урлă вĕçсе кăснă. Тĕтре иртсе кайнă. 620 метр çӳлĕшĕнче вĕçсе пыратпăр. Пирĕн айра — 10 баллă пăр. Пăрлă уйсем питех те тикĕс мар. Пăрсене вăйлăн хĕснинчен юлнă йĕрсем курăнаççĕ», — тесе пĕлтернĕ Черевичныйпа Аккуратов.

Ирхине 5 сехетре самолет çинчен çапла пĕлтернĕ:

— Хамăр вĕçсе пыракан çул çинче умра Врангель утравне куратпăр. 500 метр çӳлĕшĕнче вĕçсе пыратпăр. Пăр — 10 баллă, çӳхе юр сиййĕпе витĕнсе тăрать, питех те тикĕс мар.

Пĕр сехет те 5 минута иртсен Черевичный самолета Врангель утравĕ çине антарса лартнă. Çĕр çинче кĕске вăхăт хушши ларнă чухне экспедицин научнăй оборудованине самолет кабининчен пушатнă. Гидролог Черниговский юлташ тата магнитолог-астроном Острекин юлташ утрав çинче юлнă, вĕсем виççĕмĕш номерлĕ пăр çинче пухнă материалсене пăхса тухса йĕркеллеççĕ. Экспедицин ытти участникĕсем Шмидт мысĕ çине вĕçсе кайнă, унта 8 сехет те 13 минутăра Черевичный чиперех анса ларнă.

Апрелĕн 29-мĕш. (ТАСС).

Суворов çырăвĕ

Темиçе çул каярах гражданин В. Ленинград хулинчи комиссионнăй магазинра хĕрлĕ йывăçран тунă кивĕ лавец туяннă. Нумай вăхăт иртсен, шкатулкăна илемлетме тунă яналасем пĕр деталĕ çине ăнсăртран алăпа пусса, вăл унта пытарăнса тăракан отделени пуррине палăртнă. Çав отделенире А. В. Суворов офицер Брангаузен патне янă рекомендацийĕ çыру пулнă. Çырура çапла каланă:

«Бугского егерского корпуса подпоручик Иван Брангаузен, проходя с усердием ревности... службу приобрел особливое к себе уважение подвигом своим при взятии приступом крепости и города Измаила... в одиннадцатый день декабря 1790 года.

Он тогда способствовал к овладению бастионом и пораженню неприятеля...

Санкт-Петербург 27 апреля 1792 года. Александр Суворов-Рымнитской»

Çак документпа пĕрле ылттăн хĕрес тупнă. Хĕрес çине: «Измаила 1790 çулти декабрĕн 11-мĕшĕнче илнĕ» тесе çырса хунă. Çак хĕреспе ун чухне офицерсене наградăланă.

Интереслă документа Хĕрлĕ Çăрăк артиллери историйĕн музейне панă.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Ĕҫсыпни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн парти, профсоюз тата комсомол организацийĕсемпе пĕрле, пролетариатăн пĕтĕм тĕнчери праздникĕ—Майăн пĕрремĕш ячĕпе пухăннă чаплă ларăвĕ Сирĕн пата, пĕтĕм тĕнчери ĕҫсыннисен аслă учителĕ тата çулпуçĕ, коммунизмăн аслă зодчийĕ патне, — большевикла çулăмлă салам ярать!

Вунă çул каярах, тӳррĕмех Эсир ертсе пынипе Советсен çĕршывĕ хăй хуçалăхпа оборона енчен кая юлнине ăнăçлăн пĕтерме пуçланă вăхăтра, Эсир çапла каларăр: «Эпир малалла кайса пынине кура, пĕтĕм тĕнчери рабочи класс çапла калама пултартăр: ака вăл, манăн малти отряд, ака вăл, манăн ударлă бригада, ака вăл, манăн рабочи власть, ака вăл, манăн тăван çĕршыв, — вĕсем хăйсен ĕçне, пирĕн ĕçе тăваççĕ — аван, — пулăшăр вĕсене капиталистсене хирĕç кĕрешме, чĕртсе ярăр пĕтĕм тĕнчери революцин ĕçне». Эсир чĕнсе калани çине халăх ĕçри çĕкленӳпе ответлерĕ. Сталинла пятилеткăсен çулĕсенче пирĕн çĕршыв, пĕтĕм тĕнчери ĕҫсыннисен чĕрисене савăнăçпа шанчăк парса, палламалла мар улшăнса çĕнелчĕ.

Совет правительстви çирĕппĕн пурнăҫа кĕртсе пыракан тулашри политика — сталинла ăслă политика пулăшнине пирĕн тăван çĕршыв вăрçă хăрушлăхĕсенчен — паянхи кун тĕлне çĕр чăмăрĕн ултă пайĕнчен пилĕк пайне çавăрса илнĕ вăрçă хăрушлăхĕнчен хăтăлнă. Ленинăн—Сталинăн мухтавлă партийĕ ертсе пынипе, Эсир малалла илсе пынипе, совет халăхĕ творчествăллă ĕç — коммунизм строительстви тĕлĕшпе аслă ĕç туса пырать.

Паянхи кун Чăваш республикинчи ĕҫсыннисем те — хăйсене Эсир панă телейлĕн, тулли хаклă пурнăҫлăн партипе Совет Правительствине, Сире, хаклă Сталин юлташ, тав тăвакан ĕçсыннисем ĕçри хăватлă çĕкленӳпе пурăнаççĕ.

Паян, пĕтĕм тĕнчери пролетариллĕ пĕршухăшлăхăн праздник куннĕнче, Сире, Иосиф Виссарионович, пĕтĕм чăваш халăхĕн ячĕпе çакăн çинчен шантарса калатпăр: ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ йышăннă решенисене пурнăçласа пырса, тăван çĕршывпа тĕнчери пролетариат умĕнче хамăрăн обязательствăсене пурнăҫа кĕртсе пырса, тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн татах та нумайрах, татах та ытларах тăрăшса ĕçлĕпĕр.

Сывă пултăр Майăн 1-мĕш — пĕтĕм тĕнчери пролетариллĕ пĕршухăшлăхăн кунĕ!

Сывă пултăр Ленинăн — Сталинăн аслă партийĕ — пĕтĕм тĕнчери пусмăрти ĕҫсыннисене ирĕклĕх кӳрекен парти!

Сывă пултăр пирĕн учитель тата çулпуç аслă Сталин!

Ĕлĕкхи саманаран

Октябрьти Социализмлă Аслă революци пуличчен ĕçсыннисемшĕн сăмах ирĕклĕхĕ, ничет ирĕклĕхĕ, пухусемпе митингсем ирттермелли ирĕклĕх пулман. Урамсенче ĕçсыннисем организацине шествисемпе демонстрацисене хирĕç жандармсем, исправниксем, полици приставĕсем тата надзирательсем тискерĕн кĕрешнĕ. Пухусене, демонстрацисене хĕспăшаллă вăйсемпе сеаттса янă, унта пухăннă ĕçсыннисене вĕлернĕ, нумайшне арестленĕ.

Вырăс мар халăхсем пушшех те асаплă, йывăр хĕнхур курса пурăннă. Чăваш халăхĕ те помещиксен, полицисен пусмăрĕнче хурлăх курнă. Полицисем чăвашсене уйрăмах питĕ хытă сăнаса тăнă.

Чăваш республикинчи архивра халь ураннакан документсем чăваш халăхĕ ĕлĕк мĕнле хĕнхур курнине тĕплĕн кăтартса параççĕ. Чăвашсене Майăн 1-мĕшне уявлама чарни çинчен калакан документсем архивра нумай ураннаççĕ.

Хусанти губернатор 1905 çулти хĕçпăшаллă пăлханусем хыççăн, чăваш халăхĕ хушшинче те вăл пăлханусем тухасран çавтери хăраса ӳкнĕ. Чăваш уезчĕсенчи исправниксене çавăн çинчен малтанах асăрхаттарнă.

Хусанти губернатор 1905 çулти апрелĕн 14-мĕшĕнче уездсенчи исправниксене уйрăм циркулярлă распоряжени панă. Вăл циркуляр тăрăх, помещиксен çуртйĕрĕсене тата пурлăхĕсене салатса пĕтересрен, çунтарса ярасран сыхласа тăма исправниксене хушнă пулнă. Хресченсене пăлханасран асăрхаттарма кирли çинчен калана. Пăлхавсем пулсан унпăн ялсенчи обществăсем ответлă пулаççĕ, тенĕ.

Губернаторпа полицисем революци хумĕ сарăлса каясран хăранă. Вĕсем чăваш халăхĕ те, ытти халăхсем пекех, помещиксен пусмăрне хирĕç кĕрешĕве хутшăнасран асăрханса пурăннă. 1906 çулти апрелĕн 21-мĕшĕнче Çĕрпӳ, Етĕрне, Шупашкар уезчĕсенчи исправниксем патне губернатор секретлă циркулярлă распоряжени янă. Губернатор çапла çырнă:

«По имеющимся сведениям 1-го мая с/г. ожидается общая забастовка. Давая о сем знать, предлагаю начальникам полиции принять решительные меры к устранению всяких беспорядков и с этой целью ни под каким видом не допускать сборищ, шествий, демонстраций и других революционных проявлений. Особое внимание надлежит обратить на людей, которые будут делать попытки прекратить насилиями и угрозами торговлю и работу. К изложенному считаю необходимым присовокупить, что все предыдущие общие указания мои, относящиеся к данному предмету, должны быть осуществлены во всей их полноте».

Уездсенчи исправниксем çак хута илсенех, ăна хăйсен полици чиновникĕсем патне—становойсем, приставсем, хулари полици надзирателĕсем патне ярса панă. Вĕсене çав распоряжение тĕрĕс тата тĕплĕн пурнăçа кĕртсе пыма хушнă.

Революци хумĕ сарăлнăçемĕн сарăлса пынă. Губернатор полицисен вăйĕ çине шанса тăма иккĕленнĕ. 1906 çулти апрелĕн 30-мĕшĕнче губернатор татах тепĕр хутчен секретлă циркуляр çырса ярать. Вăл циркуляр тăрăх, революционерсем администраци представителĕсем тата уйрăм полицисем çине тапăма хатĕрленни çинчен асăрхаттарнă. Партизансем уйрăм дружинăсене пĕрлешни çинчен тата вĕсем хуласем çине çĕрле тапăнма хатĕрленнине палăртнă. Çавăн пекех рабочисемпе хресченсен пăлхавĕсем пур çĕрте те пĕр вăхăтрах пуçланма пултараççĕ, тенĕ. Губернатор çакăн çинчен пĕлтернĕ хыççăн, полици начальникĕсене кирлĕ пек мерăсем йышăнма хушнă.

Патша тарăсем—губернаторсем тата ытти çавнашкал çынсем Май уявĕ умĕн çеç мар, ун хыççăн та революци ĕçне хирĕç хаярăн кĕрешнĕ. Вĕсем кун çинчен полици чиновникĕсене часчасах асăрхаттарса тăнă.

Хусанти губернатор Стрижевский 1906 çулти июнĕн 9-мĕшĕнче чăваш уезчĕсенчи исправниксем патне секретлă циркуляр çырса ярать. Исправниксене урамсенче нимĕнле демонстрацисем тума та памалла мар, тесе асăрхаттарнă. Хулари садсенче революцилĕ юрăсем юрлама чарма хушнă.

Патша Российĕнче Май уявне иртерме чарнă пулнă. Хусанти губернатор уявччен малтан уездсенчи исправниксене циркулярсем ярса тăнă. Вăл циркулярсенче Майăн 1-мĕшĕнче хуть те мĕнле пулсан та демонстрацисем, шествисем тума чарма хушнă. Рабочисемпе хресченсене ушкăнпа çӳреме те юраман.

Шупашкар хулинчи ĕçсыннисем Майăн 1-мĕшне 1917 çулта пирвайхи хут уявланă. Вĕсем урамсене хĕрлĕ ялавсемпе тухса Май увне паллă тунă. Демонстрацинче 4 пин çын ытла пулнă. Вăл демонстраци «Сакăр сехетлĕ ĕç кунĕшĕн!», «Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!» лозунгсемпе иртнĕ. «Интернационал», «Смело, товарищи, в ногу», «Вихри враждебные воют над нами» юрăсене юрланă.

Пирвайхи демонстраци çĕрлечченех пынă. Хулари ĕçсыннисем Атăл хĕрринче нумайччен уçăлса çӳренĕ, Май уявне хисеплесе иртернĕ.

Ĕçсыннисем демонстрацине тухнине курсан помещиксем, полицисем тата ытти пуян çынсем хуларан тухса тарнă пулнă.

1917 çултан пуçласа Шупашкар хулинчи ĕçсыннисем, пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисемпе пĕрле, кашни çулах Майăн 1-мĕшне хисеплесе уявлаççĕ.

СТАХАНОВЛА ЦЕХ

СЕНТЕВĂРРИ. Судоверфь коллективĕ пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн аслă уявне—Майăн 1-мĕшне производствăллă çĕнĕ çĕнтерӳ тунипе кĕтсе илчĕ — уйăх планне апрелĕн 28-мĕшне 100,7 процент тултарчĕ.

Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, уйрăм цехсемпе стахановецсем ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Мастер Н. П. Лебедев юлташ ертсе пыракан тимрĕç цехĕ пуринчен те лайăх ĕçлерĕ. Çак цех, Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, апрель планне 150 процент тултарма обязательство илчĕ тата судоверфьри ытти мĕнпур цехсене ăмăртăва чĕнчĕ. Тимрĕç цехĕн коллективĕ хăйĕн сăмахне пурнăçа кĕртрĕ—апрелĕн 28-мĕш тĕлне уйăх планне 180 процент тултарчĕ. Çак цехри уйрăм стахановецсем уйăхри нормăна 200 процент ытларах та тултарчĕç. Сăмахран, комсомолец-тимрĕç Л. Румянцев юлташ плана 232 процент тултарса, уйăхра 619 тенкĕ ĕçлесе илчĕ. Тимрĕç-стахановецсем пĕртăван Краличкинсем—Константин тата Федор апрель планне 178 тата 138 процент тултарчĕç, П. Я. Лебедев — 184,7 процент, Н. Д. Гордеев—272 процент тултарчĕç.

Тимрĕç цехĕ судоверфьре пур енчен те кăтартуллă цех шутланать. Шалта тăрăмаса та йĕркеллĕ. Май уявĕ тĕлне чӳречесене çуса тасатрĕç.

В. ИВЛЕВ.

ПАЯН

Паян ялавсем вĕлкĕшеççĕ çилпе.
Паян çĕршыв тулчĕ уяв юррипе.
Пур халăх хавасĕ, пур çынăн телейĕ
Паян çĕкленет чи тулли ĕмĕтпе.

Аван, юрăпа урам тăрăх пыма!
Аван, пурнăçа чĕререн ырлама,
Ав, тухрĕç вĕссе темиçе самолет
Аван, вĕсене Май саламĕ пама.

Янра хытăрах, юрă, тетпĕр кашни.
Янра хытăрах, уявра ĕççынни!
Ялсем, хуласем кашни кун çĕнелеççĕ.
Янра хытăрах тулăх пурнăç юрри!

Нимле вăр-хурах та таптаймĕ çĕре.
Нимле хаяр çил те силлеймĕ пире.
Нимле тăшмансем те кунта алхасаймĕç,
Никам çĕнес çук, Сталинла ĕмĕре!

ИВАН МАЛГАЙ.

БРИГАДИР

Хусантан Мускавалла каякан поезд Çĕмĕрле станцине пырса чарăннă. Вагон ăшĕнчен вăтам пӳллĕ пĕр çамрăк çын тухнă та ниçта кайма аптраса пĕр вырăнта пăхса тăнă. «Аçталла каймалла?» шухăшланă вăл. Таврара хура вăрман кашласа ларнă, вĕтĕ çăмăр çунă, сивĕ çил уланă.

Çамрăк патĕнченех çынсем иртсе çӳренĕ. Пурте таçта васканă, анчах пĕри те çамрăк çынна сăмах хушман.

— Юлташ, кăштах сире чăрмантарма юратăп-ши?—ыйтнă вăл чылай вăхăт хушши пăхса тăнă хыççăн иртсе пыраканран.

— Да, юрать. Мĕн вара?—ответлесе калаçма пуçланă пуç çинчен тумтирпе витĕннĕ çын.

— Кунта пысăк комбинат пур теççĕ. Ĕçлеме кĕрес тетĕп. Мĕнле каймаллаши унта? Çул пĕлместĕп,—каласа кăтартнă çамрăк.

— А, юрать, юрать. Питех те аван. Çынсем кирлĕ çав,—тенĕ лешĕ кулкаласа. Урăх сăмах-омах пулман вĕсен. Поезд çинчен аннă çын кутамккине çурăм çине йăтса хунă та комбинат еннелле çул тытнă.

Çамрăк каччă часах комбината çитсе кадрсен пайне кĕнĕ, ĕçе илме ыйтнă.

— Аçтан эсир?

— Ишлей районĕнчи Пикшик ялĕсем,—ответленĕ çамрăк каччă.

— Мĕнле ĕçе кĕрестĕн?

— Ана калама пултараймастăп. Сирĕн ирĕк, кирек ăçта ярăр,—тенĕ вăл.

Тепĕр куннех Иван Алексеев ĕçлеме тухнă. Унпăн кунта пурте çĕнĕ пулнă, станоксене пĕлмен, çынсене палламан. Вăл станочниксем, рамщиксем çурса вакланă вутăна аяккалла турттарса тăнă...

Çапла пуçланнă Алексеевăн производствăра ĕçлесси. Ун чухне вăл 19 çула çеç кайнă пулнă.

Унтанпа сакăр çул иртрĕ. Пысăк улшăнусем пулчĕç çак çулсем хушшинче Алексеев пурнăçĕнче. Малтанхи вăхăтра станоксем патне пыма та хăранă. Ăçтан пĕлтĕр-ха ялтан ниçта тухса курманскер, пĕрремĕш хут завода пырсан?

Каярахпа Алексеев йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма пуçланă. Çавна кура ăна рамăсем патĕнче ĕçлеме куçарнă.

— Тăрăшсан квалификацилле рабочи пулатăнах, пултарулăх пур санăн, — тенĕ ăна станочниксем.

Ку сăмахсем Иван Алексеевича тетах хавхалантарнă, вăй панă пек туйăннă. Вăл татах та тимлĕреххĕн ĕçе кӳлĕннĕ. Çавăн чухнех сменăран тухнă хыççăн техминимум кружокне вĕренме çӳренĕ.

Тăрăшни, вăя хуни харама кайман. Цехра станоксем-сахал мар. Халĕ вăл цехри пур станоксем çинче те ĕçлеме пултарать. Çавăншăн ĕнтĕ ăна бригадира лартнă та.

Цехăн иккĕмĕш хутне пысăк пĕренесем шуса хăпараççĕ. Вĕсене рамăсем витĕр кăларнă хыççăн хăмасем пулаçç. Çав хăмасене каллех аялти хута обрезной станок патне куçараççĕ. Куверхне-реечнăй станок. Ун çинче Иван Алексеев ĕçлет.

Алексеев юлташ бригади хăйне панă ĕçе пысăк мастерлăхпа тăвать. Бригада ялан паха тĕслĕхсем кăтартать. Сменăра 7,2 кубометр хăмана çурса вакласа материалсем тумалла. Алексеев бригади 15—16 кубометр тăвать. Март уйăхĕнчи плана 203 процент тултарнă, апрельте те çавăнтан кая мар.

Бригада лайăх ĕçлени пĕтĕмпех ĕç вырăнне тĕрĕс организацилесе ĕç кунĕпе тулли усă курнинчен килет. Бригадăра 5 çын. Алексеев—чи ответла çĕрте, станок çинче ĕçлет.

Бригада членĕсем Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва паха результатсем кăтартрĕç. Çавăн хыççăн вĕсем ăмăртăва татах та сарса пыма хĕрӳлĕн ĕçе тытăнчĕç. Сорокин юлташ бригадине ăмăртăва чĕнчĕç.

— Эпир Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, апрель уйăх планне 110 процентран кая мар тултарма, пĕр браксăр, простой тумасăр ĕçлеме, ĕç вырăнне таса, тирпейлĕ тытма обязательство илтĕмĕр,—тет Алексеев юлташ.—Халĕ ĕнтĕ уççăнах калама пултаратăп, илнĕ обязательствăна эпир ытлашшипех пурнăçларăмăр, уйăх планне 15 кун хушшинчех тултарнă.

Иван Алексеевăн стахановла ĕçне комбинатри рабочисем лайăх пĕлеççĕ. Унăн хисеплĕ ĕçне комбинат дирекцийĕ те пĕр хут кăна мар палла тунă, премисем панă. Кунтан та паха награда вăл—Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ Грамоти, ăна илме иртнĕ çулта тивĕçлĕ пулчĕ вăл.

Хар. ЛИСИН.

Шкулсенче юрăхлă оборудовани çителĕклĕ пултăр

Чăваш республикинчи шкулсенче 1941—1942 вĕренӳ çулне хатĕрленмелли план тăрăх, шкулсем валли партăсемпе ытти вĕренӳ оборудованисем хатĕрлес ĕç пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çитес вĕренӳ çулĕ пуçланнă тĕле республикăри шкулсем валли çĕнĕрен 15.000 парта, 700 класри доска, 500 сĕтел т. ыт. те хатĕрлемелле.

Шкулсен ĕçĕнче лайăх оборудовани мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине пурте пĕлеççĕ. Юлашки çулсем хушшинче пирĕн шкулсем çĕнĕрен нумай оборудовани туянчĕç. Нумай шкулсенче халĕ ĕнтĕ пур класра та стандартлă партăсем, сĕтел-лукансем, вĕренӳре кирлĕ ĕç хатĕрĕсем, пособисем çителĕклĕ. Хăшпĕр шкулсенче уйрăм кабинетсен оборудованийĕ хăех 20—30 пин тенкĕлĕх е ытларах та шутланать.

Çапах та республикăри шкулсенче чылайăшĕнче оборудовани çителĕклĕ мар-ха. Уйрăмăнах кунта класри оборудовани çитменни çинчен каламалла. Хăшпĕр шкулта халĕ те авалхи кивĕ партăсене стандартлă çĕнĕ партăсемпе улăштарман. Çитменнинпе тата виçĕ вырăнлă парта хушшинче 4—5 ача тăвăрланса лараççĕ. Çав партăсем, ачасен кĕлетки-пĕвĕ ӳсĕмне шута илмесĕр тунăскерсем, ачасен сывлăхне сиен кӳме те пултараççĕ. Ун пек партăсем Чкаловски, Комсомольски, Йĕпреç районĕнче ытларах тĕл пулаççĕ (Тăрăн, Урмай, Пăва, Хумпуç, Сосновка, Александровски шкулĕсем т. ыт. те).

Тата çитменне, çĕнĕрен туса хатĕрленĕ партăсем те гигиена тĕлĕшĕнчен юрăхлă маррисем сахал мар. Партăсене тăважансем час-часах япăх ăстасем пулаççĕ, вĕсем ӳкерчĕке çителĕклĕ ăнланса илеймеççĕ, уйрăм пайсене тĕрĕс вырăнтан тумаççĕ. Шкулсен директорĕсемпе заведующийĕсем те партăсем хатĕрленĕ чухне вĕсен пахалăхĕ çине сахал çăвăрăнса пăхаççĕ.

Чылай шкулсенче класри доскасем те юрăхлă маррисем пур: вĕсем пĕчĕкĕ тата вĕсене те пулин вăхăтра юсаса сăрламаççĕ. Хăшпĕр шкулта учитель валли класра сĕтел çук; хăш чухне класра пукан та пулмасть. Вара учителĕн уроксем вăхăтĕнче кунĕпех ура çинче тăмалла килет. Классенче шкаф пулмасть. Вара учитель кашни переменăрах тетрадьсене, кĕнекесене, тĕрлĕрен пособисене хăйпе пĕрле илсе çӳрет: класран учительсен пӳлĕмне, унтан каллех класа çĕклесе каять.

Хăшпĕр шкулсенче класри доскана графить тума линейка çук. Карттă çинче кăтартма указка та çук. Ачасем карттă тăрăх вара пӳрнепе сăтăрса çӳреççĕ е карандашпа, линейкăпа кăтартаççĕ. Карттăсемпе таблицăсем çакмалли стойкăсем шкулсенче сайра-хутра кăна тĕл пулаççĕ. Карттăсене, таблицăсене учительсем урок вăхăтĕнче е стена çине, е класри доска çине, е счет çине çакса усă кураççĕ. Хăш чухне карттăна çакма май килмесон, ăна доска çийĕ урлă уртса яраççĕ, — карттăсем лучăрканаççĕ, часах пăрахăça тухаççĕ.

Чылай шкулсенче циркульсем çук. Геометри урокĕнче çаврашка тăвас пулсан каллех чухăмăн тăваççĕ. Шкулсенче час-часах чернильницăсем çителĕклĕ мар. Хăшпĕр шкулта ачасене пĕрремĕш класра вĕреннĕ чухне питĕ кирлĕ япаласем—разрезной азбукăри саспаллисене хурса усрамалли касса тата наборнăй полотно çук.

Çак япаласем çукки, е вĕсем çителĕклĕ марри, паллах, вĕренӳпе воспитани ĕçĕн пахалăхне чакарать.

Çитес вĕренӳ çулне хатĕрленнĕ май, пирĕн шутпа, çак çитменлĕхсене пурне те пĕтерес пулать. Шкулсенче сĕтел-пукан таврашне, партăсене, вĕренӳ хатĕрĕсене вăхăтра хатĕрлемелле, киввисене юсамалла, çитмест пулсан, çĕнĕрен тумалла. Пуринчен ытла çĕнĕрен туса хатĕрлес ĕç çине ытларах çăвăрăнса пăхмалла. Çĕнĕрен туса хатĕрлекен япаласен уйрăм пайĕсен виçисене харпăрхăй ăссĕн пăсса улăштарма юрамасть. Вĕсене Наркомпрос панă стандартпа килĕшӳллĕ туса хатĕрлемелле.

А. ТРОФИМОВ.

Ăмăртăва сарсах пыратпăр

ÇĔМĔРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Районри финанс работникĕсем хушшинче Май уявĕ умĕнхи ăмăрту сарăлса пырать. Уйрăм ялсоветсем ку тĕлĕшпе чылай паха результатсем турĕç те ĕнтĕ.

Анат Кăмаша ялсоветĕнчи финанс работникĕсем ăмăртăва сарса пынă май II-мĕш квартал планне апрелĕн 20-мĕш тĕлне 57,3 процент тултарнă. Вĕсем халĕ уявччен тата пысăкрах ӳсĕм тăвассишĕн — квартал планне 60 процентран кая мар тултарассишĕн кĕрешеççĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах ялсовет исполкомĕн председателĕ Шугаев юлташ тăрăшса ĕçленине палăртмалла. Вăл финанс ĕçĕпе куллен интересленсе финработниксене пулăшу парать, вĕсемпе таччăн çыхăнса ĕçлет.

Тăван ялсовечĕ (председателĕ Угодин юлташ) юлашки вăхăтра тимлĕн ĕçлет. Вăл II-мĕш квартал планне 48,6 процент тултарнă. Турхан ялсовечĕпе ăмăртăва тухнă. Хутар ялсовечĕ те хăвăртлăхсене ӳстерчĕ. Апрелĕн 24-мĕш тĕлне вăл квартал планне 50 процент ытла тултарнă.

— Ăмăртăва сарсах пыратпăр: эпир Май уявĕ тĕлне самообложени пухассине 100 проценчĕпех тултарма обязательство илнĕ. Çавна пунăçлатпăрах,—тет ялсовет исполкомĕн председателĕ Данилов юлташ.

Егоркино ялсовечĕ (председателĕ Корнилов юлташ) I-мĕш квартал планне 105 процент тултарнă. Халĕ ялсовет работникĕсем уявччен квартал планне 70 процент тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Калчасене апат параççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. Районри чылай колхозсем çуракине тухма пур енчен те хатĕрленсе çитрĕç. Апрелĕн 28-мĕш тĕлне районĕпе 300 гектар клевер акнă. Нумайĕш колхозсем кĕрхи тырăсен калчисене апат пама пуçларĕç. Апрелĕн 28-мĕшĕнче Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхоз 70 гектар çинче хлористăй калипе апат панă.

(**Хамăр корр.**).



Укерчĕк çинчен: искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ А. М. Герасимов тунă «Сталин тата Ворошилов Кремльре» картина, çак картинăшăн художник пĕрремĕш степеньлĕ Сталинла премири илме тивĕçлĕ пулнă.
(ТАСС фото-ӳкерчĕкĕ).

Геройла маевка

40 çул каярах—1901 çулта—Майăн пĕрремĕш ячĕпе Тифлисра пулса иртнĕ демонстраци — Сталин юлташ организацине тата ертсе пынă демонстраци Российăри рабочисен движенийĕн историне мухтавлă страница пулса кĕнĕ.

Ленинла «Искра» хаçат Тифлисри демонстрацине: пĕтĕм Кавказăн историллĕ демонстраци пулса тăрать, тесе хаклана. «Апрелĕн 22-мĕшĕнче вырсарникун (кивĕ стильпе) Тифлисра пулнă событи,—тесе çырнă «Искра», — пĕтĕм Кавказăн историллĕ паллă кун пулса тăрать: çак кунтанпа Кавказра уççăнах революциллĕ движени пуçланать».

Ун чухне пĕтĕм çĕршыв тăрăх революциллĕ хум çĕкленсе пынă. XIX ĕмĕр вĕçĕнче Европăра сарăлса кайнă промышленность кризисĕ Российăна та çавăрса илнĕ. Пиншер предприятисем хупăннă, вунпăр пин рабочисене урама кăлара-кăлара ывăтнă, ĕçукçи нумай чакнă, ĕç условийĕсем начарланнă. Çакна май рабочисен кĕрешĕвĕ ытларах та ытларах революциллĕ кĕрешӳ çулĕ çине кĕрсе пынă. «Рабочисем экономикăлă стачкăсенчен политикăллă стачкăсем тăвасси çине куçма тытăннă. Юлашкинчен, рабочисем демонстрацисем тума пуçлаççĕ, демонстрацийĕсем политикăллă требованисем кăларса тăратаççĕ. «Тĕп пулăр патша самодержавийĕ!» текен лозунг кăларса тăратаççĕ» (ВКП(б) историйĕ, Кĕске курс, 27 стр.).

Закавказьере рабочисен движенийĕ 90-мĕш çулсенче пуçланнă. 90-мĕш çулсем вĕçĕнчен тытăнса çак движени революциллĕ социал-демократи ертсе пыма сарăлса пырать. Çав революциллĕ социал-демократине Сталин юлташ ертсе пынă. Сталин юлташ С. Цулукидзе тата Л. Кецховели юлташсемпе пĕрле Закавказьере революциллĕ марксизм-ленинизмăн тата ленинла-искрăлла социал-демократиллĕ пирвайхи организацисен никĕсĕсене хунă. Сталин юлташ Закавказьери большевикла организацине туптаса çирĕплетнĕ.

1900 çулта Тифлисри рабочисем Майăн пĕрремĕшне Сталин юлташ ертсе пынипе уявланă. Анлануллă çĕртер рабочисем, хула хыçĕнче, Соленое ятлă кӳлĕ районĕнче пухăнса, Маркспа Энгельс сăнĕсене ӳкерсе хунă хĕрлĕ ялав таврa тачă ретсене тăрса пĕрлешнĕ. Сталин юлташăн çулăмлă сăмахне итленĕ. Сталин юлташ рабочи класăн политикăллă кĕрешĕвĕн задачисем çинчен, пролетариатăн интернационаллă солидарноçĕ çинчен тата Майăн пĕрремĕшĕнчи праздник мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен калана. Сталин юлташ калана сăмахсем ĕмĕрлĕхех рабочисен асне юлнă: «Акă хĕрлĕ ялав, эсир ăна çирĕппĕн тата вараламасăр татăклă çĕнтерӳ патне илсе çитерме тивĕçлĕ».

1900 çултă çулла Тифлисра Сталин юлташ ертсе пынипе пулса иртнĕ забастовкăсемпе паллă пулса тăрать. Чи пысăк стачка чугунçул мастерскойĕсемпе депори рабочисен август уйăхĕнчи стачки пулнă. Çак стачка Сталин юлташ ертсе пынипе, М. И. Калинин юлташ активлăн хутшăнса ĕçленипе пулса иртнĕ. Стачкăна 4 пин рабочине яхăн хутшăннă. Çак стачка Тифлисри рабочисен уччен пулнă выступленийĕсен итогĕсене тунă, 1901 çулти Майăн пĕрремĕшĕнчи историллĕ демонстраци тăвасси çине куçмалли тапхăр пулса тăнă.

1900 çул вĕçĕнче В. И. Ленин çапла çырнă: «Тепĕр çурçултан вырăс рабочийĕсем çĕнĕ ĕмĕрĕн пĕрремĕш çулĕнчи Майăн пĕрремĕшне уявлаççĕ,—çак уяв мĕнле пулсан та нумайрах центрсене çавăрса илтĕр, вăл хăйĕн участникĕсен хисепĕпе кăна мар, тата вĕсен организованноçĕпе, вĕсен ăнланулăхĕпе, вĕсем вырăс халăхне политика тĕлĕшĕнчен ирĕке кăларассишĕн, çакăнпа вара пролетариатăн класлă аталанăвĕпе унăн социализмшăн уççăнах пыракан кĕрешĕвĕн ирĕклĕхĕшĕн вĕçне çитиех кĕрешме хатĕр тăнипе мĕн май килнĕ таранах хăватлă пултăр тесе тăрăшма вăхăт ĕнтĕ». (Соч., т. IV, стр. 47).

Ленинăн çак сăмахĕсем çине ответлесе пекех, социал-демократин Тифлисри ертсе пыракан группи Сталин юлташ пуçарăвĕпе кăларнă прокламацисенчен пĕринче çапла каланă:

«Пĕтĕм Российăри рабочисем майăн пĕрремĕшне уççăн—хулан чи лайăх урамĕсенче ирттерме йышăнчĕç. Вĕсем влаçа хăюллăн та мăнаçлăн пĕлтерчĕç: эпир казаксен нухайккисемпе шашкисенчен, жандармсемпе полицейскисем асаплантарнисенчен хăрамастпăр!

Эпир те, тусăмăрсем, Российăри юлташсемпе пĕрлешĕм! Грузинсем, вырăссем, армянсем—пĕр-пĕрне алăсем парар, пĕрле пухăнар, хĕрлĕ ялав çĕклер, хамăрăн пĕртен пĕр праздникне — Майăн Пĕрремĕшне уявлар!»

Сталин юлташ тата унăн çывăх соратникĕ Виктор Курнатовский ертсе пынипе Тифлисри рабочисем хула урамĕсенчи пĕрремĕш демонстрацие ирттерме вăйлăн хатĕрленнĕ. Жандармерипе полици те хатĕрленнĕ. Март уйăхĕн вĕçĕнче В. Курнатовскине арестленĕ. Сталин юлташ патĕнче ухтару тунă. Сталин юлташ пытанса ĕçлеме тытăннă, Майăн пĕрремĕшĕнчи демонстрацине хатĕрлес ĕçе ертсе пынă.

Обстановка пĕтĕм ĕçе питех те тĕплĕн пытарса усрама хушнă. Рабочисен чен пĕрин хваттерĕнче Сталин юлташ ытти юлташсемпе пĕрле Майăн пĕрремĕшĕнчи политикăллă демонстраци планне сӳтсе-явнă вăхăтра, тепĕр рабочи хваттерĕнче çав демонстраци валли ялав хатĕрленĕ, ун çине Сталин юлташран илнĕ лозунгсене çырнă.

Малтан демонстрацие апрелĕн 18-мĕшĕнче (кивĕ стильпе) ирттермелле тунă. Ирхине 5 сехет тĕлне, фабрикăсем пирвайхи гудоксем панă тĕле, рабочисем мастерскойсене пухăнаççĕ. Унтан, виççĕмĕш гудок хыççăн, 5 сехет çурă тĕлнелле Тифлисри мĕнпур фабрикăсемпе заводсенчи рабочисем, ĕçе тытăлас вырăнне, урамсене тухмалла тата, пысăк колоннăсене тăрса пĕрлешсе, ялава вĕлкĕштерсе, хулан центрти пайĕсене—Головинscки проспекта тата Эривань площадьне каймалла пулнă.

Анчах та рабочисем хатĕрленни çинчен жандармери пĕлнĕ. Ыран апрелĕн 18-мĕш (çĕнĕ стильпе Майăн 1-мĕш) тенĕ чух çĕрле массăллă арестсем туса ирттернĕ. Апрелĕн 18-мĕшĕнче иртхине Тифлис урамĕсене войскăсем, полици, жандармери тухса тулнă. Демонстрацине апрелĕн 22-мĕшне куçарма — плана улăштарма тивнĕ. Революциллĕ событисем ыран апрелĕн 21-мĕш тенĕ чух çĕрле пуçланнă. Çав каçхине Тифлис урамĕсенче, заводсенче, фабрикăсенче тата обществăллă вырăнсенче Майăн пĕрремĕш ячĕпе вырăс тата грузин чĕлхисемпе пичетлесе кăларнă питех те нумай прокламацисем пăрахса тухнă. Апрелĕн 22-мĕшĕнче хула центрĕнче—Солдатски базарта демонстраци тума хатĕрленни çинчен пĕлсе, патша влаçĕсем çак вырăна ирхинех çуран тата лашаллă стража кăларса тултарнă, казаксемпе войскăсене инçех мар вырăнта пытарса тăратнă.

Апрелĕн 22-мĕшĕнче (майăн 5-мĕшĕнче), Сталин юлташ хатĕрленĕ план тăрăх, тӳрĕмех вăл ертсе пынипе, 2 пин рабочи ытла демонстрацине тухнă. Кунта чугунçулăн главнăй мастерскойĕсенче, атă-пушмак фабрикинче, табак фабрикисенче тата хулари ытти предприятисенче ĕçлекен рабочисем пулнă. Демонстрацине ертсе пырса, Сталин юлташ рабочисене хăйсене мĕнле тытмалли çинчен, кĕрешӳре мĕн тумалли çинчен кăтартса панă. Çак демонстраци участникĕсенчен пĕри çапла каласа парать: демонстраци пуçламăшĕнче Сталин юлташ рабочисене ялава çĕкленме сĕннĕ.

Урса кайнă полицейскисемпе казаксем, шашкăсемпе нухайккасене кăларса, демонстрантсем çине пырса тапăннă. Анчах та демонстрантсем хăраса ӳкмен. Вĕсем çапăçма йышăннă. «Полици хĕсĕрлесе пырсан,—тесе каласа парать демонстраци участникĕ, — эпир ялав патнелле вирхĕнтĕмĕр, вăл каллех çӳлелле çĕкленчĕ».

«Пĕтĕм хулара хăрушла паника пуçланнă,—тесе çырнă ленинла «Искра» çак демонстраци çинчен.—Хăшпĕр вырăнсенче лавсем чарăнса тăнă: кучерсем сике-сике анса, хăйсене тăван рабочисене пулăшма çапăçу пыракан вырăна васкаса чупнă. Хастарлă кĕрешӳ 45 минута хушши пынă; çак вăхăт тĕлне нумай юн тăкăннă, нумай çын аманса ӳкнĕ. Акă аманнă рабочи ӳкет; вăл йăлтах юнланса пĕтнĕ; полицейскисем ăна урасемпе таптама пуçлаççĕ, вăл çапах та пĕр чарăнмасăр кăшкăрать: «Сывă пултăр социализм, сывă пултăр сакăр сехетлĕ ĕç!»

Çакăн хыççăн виçĕ кун хушши Тифлис хули вăрçăри пек положенире пурăннă, хĕçпăшаллă лагере аса илтернĕ. Тифлисри социал-демократсем Сталин юлташ ертсе пынипе туса пыракан революциллĕ ĕç вырăнти влаçсене кăна мар, тата Петербурга та шиклентернĕ. 1902 çулти март уйăхĕнче полици департаменчĕн директорĕ Зволянский запискăра çапла паллă тунă: Тифлисри социал-демократи пропаганда сарса пынипе юлашки икĕ çул хушшинче «вăхăт-вăхăтпа рабочисем пухусем, стачкăсем, забастовкăсем, боевой кассăсем туни палăрать, 1901 çулти апрель уйăхĕнче рабочисемпе полици-войскăсем хушшинче хĕçпăшаллă тытăçу та пулса иртрĕ». «Тифлисра,—тесе çырнă полици департаменчĕн директорĕ,—йăлтах тĕрĕс тата лайăх пытарăнса пурăнакан, вырăнти розыск вăйĕсем шыраса тупма пултарайман организаци ĕçлет пулас. Ансăртран кăна пек тăвакан, пуринчен ытларах нимĕнле результат та паман ухтарусем пулăшмаççĕ, движени хăвăрт ӳссе пырать».

Апрелĕн 22-мĕшĕнче Тифлисра пулса иртнĕ событи пролетари массисен революциллĕ кăмăлне т[illegible]ах та ытларах çирĕплетнĕ, рабочисен ĕçĕшĕн кĕрешекенсен речĕсене татах та ытларах çирĕплетнĕ. Майăн пĕрремĕш ячĕпе пуланă демонстраци хыççăн темиçе уйăх иртсен—1901 çулти сентябрь уйăхĕнче—Бакура Сталин юлташ тата унăн çывăх соратникĕ Ладо Кецховели организацине «Брдзола» («Кĕрешӳ») ятлă хаçат—Тифлисри революциллĕ социал-демократи оргăнĕ тухма пуçланă. Çакă вăл грузин чĕлхипе кăларма пуçланă пĕрремĕш нелегальнăй хаçат, пытанса кăларса тăнă хаçат пулнă. Çав çулах ноябрь уйăхĕнче Сталин юлташ пуçарнипе социал-демократла организацин Тифлисри пĕрремĕш конференцийĕ пухăннă. Конференци РСДРП-ăн Тифлисри комитетне суйланă. Комитета Сталин юлташ кĕнĕ.

«Рабочисен Тифлис урамĕсенчи демонстрацийĕ,—тесе çырать Л. П. Берия юлташ хăйĕн «К вопросу об истории большевистских организаций в Закавказье» ятлă кĕнекинче,—политикăллă питех те пысăк событи пулса тăнă тата пĕтĕм Кавказ çине калама çук пысăк революциллĕ влияни панă».

Г. ГРИГОРЬЕВ.

Г. КОСТИНПА Г. ХАРЛАМПЬЕВ ФОТО-МОНТАЖĔ.

М. И. Калинин 1919 çулта Улатăр хулинче Май уявĕ ячĕпе иртнĕ митингра пулнă

1919 çулти майăн 1-мĕшĕнче М. И. Калинин Улатăрта пулнă. Хулари ĕç-пуллисем Май уявĕ ячĕпе пухăннă митингĕнче Михаил Иванович Калинин сăмах калана.

— Юлташсем, — тенĕ вăл, — сире ВЦИК ячĕпе саламлама ирĕк парăр. Центральнăй власть ячĕпе саламласа, эпĕ сире пролетариатăн аслă уяв кунĕ ячĕпе сывлăх сунатăп. Паянхи куна пĕтĕм çĕр чăмăрĕ уявлать. Çак вăхăтра çĕр чăмăрĕн тепĕр енне илсе пăхас пулсан, унта та Америкăри рабочи юлташсем пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн çак праçникне уявласа ирттереççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, паян Май уявне уявласа, вырăс революцийĕ çине пăхаççĕ. Пĕтĕм тĕнчери пролетариат пĕр çĕршыври революци çине тимлĕн пăхса сăнаса пролетариллĕ праçнике уявлани халиччен пĕрре те пулман-ха.

Халиччен эпир кĕрешекен пролетариатăн отрячĕсенчен пĕри пулнă, халь мĕнпур пролетариата ертсе пыраттăр. Российăри революци поражени тăсни пĕтĕм тĕнчери революци поражени тăсни пулса тăрать. Çак, çавтери ответлă самантра, пусмăрта пурăнакан пĕтĕм тĕнчери классем Российăри революци çине пăхса тăнă чух, рабочи класпа буржуази хушшинче юлашки, татăклă тытăçу пулса иртет. Ку таринчен эпир вырăс буржуазийĕ çагăнине сирсе пынă çеç мар, тата ăна эпир умлă-хыçлăнах поражени те кӳнĕ, ăна вăйлăн пырса çапнă. Анчах пирĕн фронт пиншер çухрăм тăсăлать. Эпир пĕр фронт çине ытларах çавăрăнса пăхнă чух, тăшман тепĕр фронтра вăйланать.

Хальхи вăхăтра пирĕн ответлă фронтсем—Кантăр тата Хĕвелтухăç фрончĕсем пулса тăраççĕ. Кантăр фронтне, чĕртавар тата тырă парса тăракан фронта, хальхи вăхăтра йăлтах пĕтерсе хуман тесе шутлама пулать пулсан, çав фронт çитес çывăх вăхăтрах пĕтет тесе шухăшлама сăлтавсем пур. Анчах çак вăхăт хушшинче Хĕвелтухăç фронтра, эпир сахалрах çаврăнса пăхнă фронтра, тăшман хăйĕн вăйне ӳстернĕ. Колчак, пĕр вăхăтлăха чарăнса тăнипе усă курса, чылаях вăйлă çар пухрĕ те, Атăла татса илме тăрăшса, çав çарсене пире хирĕç тăратрĕ. Атăл пирĕншĕн пысăк вырăн йышăнса тăрать, хальхи вăхăтра пирĕн пĕтĕм вăя, революциллĕ пĕтĕм хастарлăха Атăла Колчакран сыхласа хăварас ĕç çине хумалла, ăна Атăла татса илме памалла мар. Хальхи вăхăтра транспорт, шыв çулĕсем юхăнса кайнă пирки, вăл çулсене татса илни çурçĕрти губернисене выçă тăратса хăварма пултарать. Çавăнпа та рабочисемпе хресченсен правительстви хальхи вăхăтра хăйĕн пĕтĕм тимлĕхне Хĕвелтухăç фрончĕ çине хумалла. Юлашки кунсенче вăл фронтри хăшпĕр чăсенчен ырă хыпăсем килеççĕ: Колчакăн сулахай флангĕ парăнать, сылтăм флангне çапса аркатнă. **(Хытă алă çупаççĕ, «Урра» кăшкăраççĕ).** Хальхи вăхăтра Мускав, Петроград, центрти мĕнпур хуласем, фабрикăсем тата заводсем çав фронта пĕр отряд хăшпĕр чăсенчен ырă хыпăсем килеççĕ: Колчакăн сулахай флангĕ парăнать, сылтăм флангне çапса аркатнă. Улатăр хулинчи рабочисемпе граждансем çак кĕрешӳве вăй ситнĕ таран хутшăнĕç тесе шутлатăп. Эпĕ çакăн çинчен тарăнăн шанса тăратăп: пирте пур çынăн пек революциллĕ хастарлăхпа тата энтузиазмпа эпир хамăрăн тăшмана—Колчака тĕпипех çапса аркатма пултаратпăр.

Улатăр хулинчи тата уездĕнчи ĕçчисеннисем М. И. Калинин юлташ докладчĕ тăрăх, 7000 сын пурте пĕр саслă пулса, резолюци йышăннă. Вĕсем хăйсен резолюцийĕнче М. И. Калинин юлташа саламлана тата тĕнчери империализма, çĕршыври контрреволюцине хирĕç, социализмлă революцин Хĕрлĕ Ялавĕшĕн юлашки тумлам юн юлмиччен кĕрешме сăмах панă.

Савăнăçлă кун

Эпир, Шупашкарти 3-мĕш №-лĕ детсадри работниксем, Майăн 1-мĕшне иккĕ эрне малтан хатĕрленме пуçларăмăр. Утренникăн планне туса педсоветшанинче сӳтсе-явăрмăр. Майăн 1-мĕшне хатĕрленсе, эпир ăна интернационаллă уяв пек туса кăтартма тăрăшатпăр. Çавăнпа та эпир хамăрăн детсадри ачасене Совет Союзĕнчи тĕрлĕрен халăхсен творчествипе, вĕсен çитĕнĕвĕсемпе паллаштартăмăр.

Тăван çĕршыв çинчен, юратнă Сталин çинчен тата мухтавлă Хĕрлĕ Çар çинчен сырнă юрăсем нумай вĕрентĕмĕр.

Ачасем савăнăçлă праздникне — Майăн 1-мĕшне питĕ хавас кĕтеççĕ, хăйсен пуканисене, «Мишкăсене» çĕнĕ кĕпесем тăхăнтартса, чечек кăшălĕсем туса илемлетеççĕ. Пуринчен ытла ачасем Сталин портретне ытарма çук лайăх илемлетсе хучĕç.

Демонстрацине капăр тухма, ачасем воспитательницăсем пулăшнипе, атрибутсем нумай хатĕрлерĕç: чечексем, çăлтăрсем, лĕпĕшсем, самолетсем, вертушкăсем тата ыт. Кĕçĕн группăри ачасем валли илемлĕ хĕрлĕ хăмпăсем туса хунă.

Пур ачасем валли те тĕрлĕ национальноçсен евĕрлĕ костюмсем çĕлесе хатĕрленĕ: грузин, украинец, узбек тата ыт. Вăл тумтирсене вĕсем утренникре тăхăнса тухаççĕ. Кĕçĕн çулхи группăри ачасем вырăсла тумсем тăхăнса тухса «Ленточки красивые» ятлă ташă ташлаççĕ, çав вăхăтрах чи пĕчĕк хĕрача Люся пĕчченех украинла ташласа кăтартать.

Ачасенчен хăш-пĕрисем утренникре калама сăвăсем вĕреннĕ. Роберт Траяхин — «Первое Мая», Гена Ефремов — «О Сталине» сăвăсене вуласа параççĕ.

Р. БОРИСОВА.
Детсад заведующийĕ.

Укерчĕк çинче: Аэроклубри отличник-комсомолецсем П. Плотников (çулахайра) тата И. Иванов юлташсем.

К. Бабаев фото-ӳкерчĕкĕ.

УЙĂП МИШШИ

СОВЕТ ПАСПОРЧĔ

Читайте,
завидуйте,
я —
гражданин
Советского Союза.

В. МАЯКОВСКИЙ.

Пĕчĕк çеç хула
Анăçри чикĕре
Пире кĕрлесе кĕтсе илчĕ.
Ăна халь совет сăн-сăпачĕ кĕрет.
Кунта урăх пурăнăç килчĕ.

«Милици»
Тесе çырнă çурт умĕнчен
Куллен татăлма пĕлмест халăх.
Ирпе пухăнаççĕ хĕвел тухиччен,
Çĕрле пуличчен уçă алăк.

Кĕреç ваттисем
Çамрăкланса,
Мăнаçлăн кĕрет яш çынĕ.
Тухаç çав тери савăнса, хумханса,
Куççулĕ юхать ав, тахшинĕн.

Ыйтатăн:
— Мĕн пулнă сире кун пекех?
— Чĕнме те сăмах тупаймастпăр,—тесе.
Хăйсен аллинче пĕчĕк çес кĕнеке,
Совет гражданинĕн паспорчĕ.

Тин çеç кĕнеке тытса
парта умне
Ларан шкул ачилле çутăласçĕ.
Паха паспорта тытаç кăкăр çумне,
Пĕрер саспаллийĕн вуласçĕ.

Курасчĕ эпир вĕсен савăнăçне,
Вĕсен сăмахне итлесчĕ!
Çынсем туянаççĕ этем тивĕçне,
Совет паспортне илеççĕ!

Вĕсен асĕнче тамăк евĕр кунсем;
Пансен юнлă пусмăрĕ, вăрçă.
Тӳсми тарăхса кӳтсе çитнĕ чунсем,
Ăна час манма та йывăр çав...

— Эпĕ хам украинец. Пире çын темен.
Пиртен пур çĕрте те ютшăннă.
Ниçта та тăван чĕлхепе чĕнтермен,
Тăван юрăна манма хушнă.

Кам мантăр Шевченко, Франко чĕлхине?
Тăван юрра кам туртса илтĕр?
Халăх саламлать Хĕрлĕ Çар килнине,
Эсир чăн телей илсе килтĕр.

— Поляк эп. Анчах Польша маншăн пулман.
Ĕçлен çĕр çинче—çĕрĕ панăн.
Ĕçлен заводра—завод пулнă хуçан,
Пире чун усравĕ çеç панă.

«От можа до можа!» çихĕретчĕç пансем.
Мухтанчăклăн вăрçă пуçларĕç...
Епле кăна тӳсрĕç ури тупанĕсем
Кунта курăнсан совет çарĕ!

— Эп чухăн еврей, мăшкăл тӳснĕ Абрам.
Çемье тĕнчипех ман саланнă.
Ăçта выртĕ-ши вилсен хамăн тăпрам,
Тесе эп нумай шухăшланă.

Ирак, Палестина—таçти çĕрсене
Çитсе эп çӳренĕ, ывлăм.
Ниçта та курмарăм этем тивĕçне,
Пулман ман тăван çĕршывăм...

Ыйтаççĕ вĕсем: ку чăн-и, тĕлĕк-и?
Ăçтан тавçăрмашкăн ĕлкĕрĕн?
Иĕпе чăх пек шур ăмăрткайăк мĕлки
Анчах хураллатчĕ тискеррĕн.

Халь пусмăр, асап—пурте, пурте хыçра!
Умра—çутă кун йăлтăртатрĕ.
Телейлĕх хĕвелĕ çиçсе тухăçран
Çĕкленчĕ те ăшшăн йăпатрĕ.

Вăл ăшăтрĕ кӳтнĕ чĕрс-чунсене,
Пурне шанчăк пачĕ, çĕклерĕ.
Хĕнхур юнсăрлатнă шурхан сăнсене
Хавас кулăпа чечеклерĕ.

Поляк, украинец, еврей халиччен
Кунта пĕр пĕринпĕн ют пулнă.
Паян совет паспорчĕ вĕсен аллинче,
Пĕр савăнăçпа кăмăл тулнă.

Тинех çынсем тупрĕç тăван çĕршывне,
Пыртать вĕçхĕррисĕр вăл, аслă.
Унта ирĕк ĕç телейлет çынсене,
Хĕвеллĕ малаллăх, пуласлăх.

Унта аслă Сталин ĕçлет, пурăнать,
Вăл ирĕк, телей кӳрсе панă.
Эпир тав туса саламлатпăр ăна,
Кашнин чĕринче унăн ячĕ.

Ун ячĕпе чăн пурнăçне пуçласа
Ман аслă çĕршыв çĕнĕ çынĕ
Мăнаçлăн çĕклет паспортне савăнса:
— Ак, кур, эп—Совет гражданинĕ!

Лиско — Львов.

1940—41 ç. ç.

ТРАКТОРИСТСЕМ

Ялăн тăвайккиллĕ вырăнĕнче, садсем умĕнчех ретĕн-ретĕн тракторсем лараççĕ. Çакăнтан пăхсан сарăлса выртакан уйсем илемлĕн курăнаççĕ. Тырăсем симĕс пĕркенчĕк тăхăннă пек хитре те паха. Ирхине, хĕвел ял çине ӳксенех, кунта трактористсем, плугарьсем пухăнаççĕ. Тракторсем ĕçе тухман-ха, çапах та кунта кунĕпех ĕç вĕрет. Трактористсем хăйсен машинисене тепĕр хут тĕрĕслеççĕ, тасатаççĕ, уйрăм пайĕсене çирĕплетеççĕ. Хушăран тракторсене ĕçе яраççĕ, мотор ĕçленине тĕрĕслеççĕ. Пысăк, патвар бригадир Антон Иванович Миговаров трактор çине ларать, мотор шавланине итлет.

— Аван ĕçлет трактор... Паянах уя тухма юрать,—савăнса калать бригадир тракторист сене.

Бригадир трактористсене будкăна чĕнсе илет те, техникăллă вĕренӳ семинетне пуçлать. Вăл машинăна ĕç вăхăтĕнче мĕнле пăхмалли, юсамалли çинчен тĕплĕн каласа парать. Кунта кашни трактористранах машина çинче ĕçлеме çеç мар, ăна лайăх, типтерлĕ пăхма, юсама пĕлинине ыйтаççĕ. Антон Иванович трактор çинче вуннăмĕш сул ĕçлет. Пилĕк çул ĕнтĕ вăл 14-мĕш бригадăн бригадирĕ. Унăн бригадинче тракторсене кашни трактористах юсать, ăна хăйне МТС-ра механик тесе чĕнеççĕ. Иртнĕ çулта тракторсем пĕрре те стройран тухман, пурте вĕсем лайăх ĕçленĕ. Çав вăхăтра çу каçа та бригадăна МТС механикĕсем килмен. Уйхир ĕçĕсем вĕçленсен трактористсем хăйсен машинисене хăйсемех юсанă. Бригадира декабрь уйăхĕнчех пур тракторсене те юсаса çитернĕ.

Антон Иванович будкăран тухрĕ те, пире хăйĕн бригадинчи çынсем çинчен мăнкăмăллăн каласа пама пуçларĕ. Кунта пурте ĕçе пĕлекен, ĕçе юратакан çынсем. Вĕсемпе Антон Иванович пĕр çул мар ĕнтĕ ĕçлет, вĕсене кашнине пĕлет. Яков Краснов пилĕк çул трактор çинче, колхоз уйĕсенче ĕçлет, çулленех ĕç планне ытлашшипех тултарать тата çунтармалли япаласене тирпейлĕ, перекетлĕ тыткалать.

Порфирий Иванов, Алексей Трофимов, Ульяна Григорьева бригадира тăваттăшар çул ĕçлеççĕ. Вĕсем кунта чи малтанхи гектара сухаланă, кунта вĕсем ĕçе вĕреннĕ.

МТС-ра ĕçре чапа тухнă трактористсем нумай. Вунă çул ĕнтĕ бригадир пулса Зеленовкăри колхозниксем Григорий Мишаков тата Степан Храмкин ĕçлеççĕ. Вĕсен 3-мĕш бригади Колновка, Зеленовка, Булатово, Сявалкас Хирпуç колхозĕсенче ĕçлесе чапа тухнă. Колхозсем вăйлă тырпул туса илеççĕ, Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕсем пулма тивĕçлĕ пулнă. Григорий Мишакова тата Степан Храмкина Главвыставком Пысăк кĕмĕл медаль парса наградăланă. Вуншар трактористсем халĕ Хĕрлĕ Çарта танксем, автомашинăсем çинче ĕçлеççĕ.

МТС-ра халĕ темиçе маркăллă тракторсем ĕçлеççĕ. Çĕнĕ тракторсене лайăх пĕлмесĕрех ĕçлеме йывăр. Трактористсем хăйсен ĕçне, машинăна юратнипе часах çĕнĕ машинăсем çинче те ĕçлеме вĕренеççĕ. Тракторист Иван Кудрявцев 4 çул трактор çинче ĕçленĕ. Малтанхи çулсенче вăл «ЧТЗ» трактор çинче ĕçленĕ. Кашни çулах плана тултарса пынă. Иртнĕ çулта вăл газогенераторлăй трактор çинче ĕçлеме пуçланă: çĕнĕ трактор техникине çине тăрса вĕреннĕ, ăна лайăх пăхма, юсама хăнăхнă. 1940 çулта вăл Капралов трактористпа пĕрле ĕçлесе 1010 гектар сухаланă. Хĕлле вĕсем трактор çинче татах та лайăхрах ĕçлеме вĕреннĕ, литература вуланă. Ялсенче вĕсем чуркăсем типтĕнĕ, çак ĕçе хăйсем ертсе пынă. 1941 çулта вĕсем хăйсен тракторĕпе 680 гектар сухалас вырăнне 1115 гектар сухалама обязательство илнĕ. Тракторист Гордей Цветков МТС-ра 10 çул ĕçлет. Иртнĕ çулта вăл газогенераторлăй тракторпа пĕр пĕрченех 552 гектар сухаласа ĕç планне 185 процент тултарнă. Унăн тракторĕ яланах лайăх ĕçлет, юлашки çулсенче пĕрре те çĕмĕрĕлсе пăсăлни пулман.

Трактористсем халĕ хурçă утсен рулĕсене тытса пыраççĕ. Тăван çĕршыв çине тăшмансем тапăнсан, вĕсем алла винтовка илсе, танк çине ларса паттăрăн çапăçма хатĕр. Рассадин, Быстрицкий трактористсем Хĕрлĕ Çарăн младший лейтенанчĕсем, нумайĕшĕсем младший командирсем.

Трактористсем — вĕсем колхозлă ялăн çĕнĕ çыннисем, малта пыракан колхозниксем.

Е. ЕФРЕМОВ.

Стахановла ĕçленипе тунă çитĕнӳ

Пирĕн цех тăваттăмĕш цех коллективĕпе ăмăртса ĕçлет. Пĕр уйăх каялла цехри рабочисем пĕрремĕш кварталти çитĕнӳсене çирĕплетсе, апрельри плана виçĕ кун малтан тултарма обязательство илчĕç. Çакăн хыççăн вара социализмлă ăмăрту татах анлăраххăн сарăлса кайрĕ. Кашни смена, кашни рабочи Май уявне çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илес тесе ĕçе хастарлăн тытăнчĕç.

Калас пулать, социализмлă ăмăртупа стахановла движени пире уява чăн-чăнах çĕнĕ çитĕнӳ тунипе кĕтсе илме пулăшрĕç. Эпир апрелĕн 26-мĕшĕнче уйăхри плана 101,7 процент тултартăмăр. Çапла вара пирĕн цех апрель уйăхĕнче планран ирттерсе государствăна тата темиçе вуншар пин тенкĕлĕх продукци панĕ.

Ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пырас тĕллĕпе стахановла тĕслĕхсем кăтартакансен хисепĕ ӳсрĕ, уйрăм стахановецсем рекордлă çитĕнӳсем турĕç. Коммунист Фионов, комсомолец Шалфеев, станочниксем Николаев, Большакова, арматурщиксем Павлов, Лопухов т. ыт. чылай юлташсем вăтамран хăйсен нормисене 130—250 процент тултарса пычĕç.

Халĕ эпир иккĕмĕш квартал планне срокчен тултарассишĕн кĕрешетпĕр.

П. АНИСИМОВ.
Çĕмĕрле комбинатĕнчи 3-мĕш механĕрлĕ цехăн вăхăтлăх технорукĕ.

СЕРГЕЙ ЯЛАВИН

ВĔСЕН ÇЫВĂХ ЮЛТАШĔ

Нестер Борисов ирех вăранать, васкаса тумланать. Тумтирĕсене каçах вăл çĕре тирпейлесе хунă, шыраса вăхăт иртмелли çук: пальтипе çĕлĕкĕ пăтара çакăнса тăраççĕ, çăматти кĕмака çумĕнче, кĕпи-пăлаварĕ вырăнĕ çумĕнчех — пукан çинче. Икĕ куçĕ те сĕм-суккăр унăн. Çамрăклах унăн куçĕсем чечче чирĕ хыççăн ним курми пулса юлнă. Халĕ вăл Сĕренкасси ялĕнчи вĕрен-кантра явакан артелне ĕçлесе пурăнать. Вăл çеç мар унта, куçсăр çынсем татах пур, ушкăнне 42 çын.

— Кая юлмарăм-ши паян? — шухăшлать вăл, пальтине тăхăнса. Анчах вăл кая юлман, Мускав вăхăчĕпе 6 сехет те çитмен-ха.

Çĕлĕкне тăхăниччен малтан, хăнăхнă йăлапа, пусне икĕ аллипе сăтăркаласа илет. Унтан вара туйине алла тытса, ирхи уçă та таса сывлăша кăкăр тулли сывласа, урам тăрăх ял вĕçнелле утать. Куракан çын пекех тӳп-тӳрĕ утса пырать вăл тӳрĕ урам тăрăх. Пусне çӳлерех çĕклесе ниçталла та пăркаламасăр пынинчен е туяпа пынинчен кăна вăл суккăр иккенне пĕлме пулать.

Ял вĕçĕнче йĕри-тавра карта тытса çавăрнă пысăк сурт ларать. Елĕкхи вăхăтра унта чиркӳ пулнă пулмалла. Çавăнталла васкаса утать Борисов юлташ. Унта халĕ вĕрен-кантра явакан мастерской вырнаçнă.

Вăл пырса ларнă хыççăн нумаях та вăхăт иртмест, ыттисем те пĕрерĕ-икшерĕн пырса кĕреççĕ, пĕр-пĕрне сывлăх сунса тенкелсем çине е сĕтел хушшине йăнăшанса лараççĕ. Петр Конистаркин та килсе çитрĕ, унăн куçĕ лайăхах курать, анчах уриссм сывмар. Кĕрсенех вăл, шкапăн аялти ещĕкĕнче, таса çĕрте ларакан радиоприемнике унтан-кунтан пăркаласа пăхса майласа хатĕрлерĕ.

—Халех пулать-и-ха? — ыйтаççĕ унтан хăшĕ-пĕрисем.

— Халех пуçланать, 10—15 минута çеç кĕтмелле.

Никам та нимĕн те шарламасть, радио калама пуçласса кĕтеççĕ. Пĕре докладсем параççĕ; юрланине те, ташланине те, спектакль вылянине те итлетĕн.

«Юлашки хыпарсен ирхи кăларăмне» итленĕ хыççăн ирхи апат çиме ларчĕç. Çав вăхăтра унта вĕсен учителĕ Сергей Николаевич Николаев пырса кĕчĕ. Вăл та, вĕсем пекех, суккăр, унăн икĕ куçĕ те курмасть.

Инкек куçа курăнса килмест вĕт вăл. 7 çул каялла вăл тăп-тăрă куçлă, сывă çын пулнă, шкултан вĕренсе тухнă хыççăн тĕрлĕ вырăнсенче хастарлă ĕçленĕ, ăна пурте савнă, пурте юратнă.

1933 çулта Свердловск хули çывăхĕнчи Уралмаш заводĕнче ĕçленĕ вăхăтра киле Сини-Алдыш ялне (Канаш р.) отпуска тавăрнă. Ашшĕ унăн граждан вăрçи инваличĕ пулнă, нимĕнле ĕçе те тухайман. Ахаль тăрас мар, аттене пулăшас тесе, вăйпитти Сергей вăрман касма каять. Йывăр ĕçлесе тарланă хыççăн хытă шăннă та, пĕр ирхине ыйăхран вăраннă çĕре суккăр пулса ларнă. Çитменнине тата Одесса хулинче операци тутарни те пулăшу паман.

Анчах Сергей Николаевич пурнăçран юласшăн мар: куçсăр пулсассăн та, вăл аслă шкулсене кĕме хатĕрлекен курсра, унтан Шупашкарта учительски институтра вĕренет. Халĕ çак мастерскойра хăй пекех куçсăрсене истории, вырăс чĕлхи, географи предмечĕсене вĕрентет. Тепĕр учителĕ, Васильев юлташ, физикăпа, чăваш чĕлхипе т. ыт. предметсемпе вĕрентет. Вăл ВОС (Суккăрсен Пĕтĕм Союзри обществи) ячĕйĕн председателĕ. Вĕренекенĕсем вĕсене иккĕшне те юратаççĕ, лайăх вĕренме тăрăшаççĕ.

Кульков, Смирнова, Калиставкин, Борисов, Васильев, Иванова—отличниксем. Вĕсем производствăра та стахановла ĕçлеççĕ.

Сакăр сехетре пурте ĕçе, производствăна каяççĕ. Заводри цех пек пысăк пӳлĕмре вĕсен кашнин хăйсен вырăнĕ пур. Вĕсем хушшинче стахановла ĕçлекенсем те сахал мар. Норма тăрăх кашнин 25 метр çурăллă 8 вĕрен явмалла. Стахановецсем çав нормăна вĕçĕ хут ытларах тултараççĕ. Акă Егор Васильев хăй нормине—384 процент, Нестр Борисов—380 проц., Петр Григорьев—300 проц., Клавдия Иванова—158 проц., Алексей Васильев 146 процент таран тултарса ĕçлеççĕ.

Хастарлă çынсем вĕсем, государство шучĕ çинче пурăнаспăн мар, хăйсем куçсăр пулсан та, государствăна усă пама тăрăшаççĕ, çавăнпа çапла тăрăшса ĕçлеççĕ ĕнтĕ.

Хăйсен культурине хăпартас тĕллĕпе вĕсем çак иртнĕ 5 çул хушшинче пысăк çитĕнӳсем тунă: тĕрлĕрен самодеятельность кружокĕсем организацленĕ, хор тата драма кружокĕсем çав тери аван ĕçлеççĕ. Иртнĕ çулта вĕсем сывăхри ялсене гастроле кайса 12 постановка кăтартнă, концертсем панă, район центрĕнче радио тăрăх темиçе хут та юрласа панă. Чăваш автономийĕ 20 çул тултарнă уявра художестваллă самодеятельность олимпиадине килсе, Шупашкарта постановка кăтартнă, концерт панă. Вĕсен хăйсен чаплă юрă ăстисем, ташă мастерĕсем, музыкçăсем пур. Еç хыççăн, каçхине вĕсем пурте хĕрлĕ кĕтесе пуçтарăнаççĕ: юрлаççĕ, ташлаççĕ, тĕрлĕрен вăйăсем выляса савăнаççĕ. Ку ĕçре вĕсене Чебрукова юлташ ертсе пырать, унăн хастарлă помощникĕ Самарин юлташ та тăрăшса ĕçлет.

Вĕсем хальхи пурнăçпа тан утса пыма тăрăшаççĕ, вăл çакăнтан курăнать: политкружокра вĕсем «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренеççĕ.

Нимрен ытла вĕсем радио тăрăх вĕренсе пыраççĕ: партин XVIII конференцийĕн материалĕсене, Верховный Совет Сессийĕн материалĕсене тата çавăн пек паха материалсене вĕсем вырăсла та, чăвашла та итлесе, хăйсен пĕлĕвĕсене тата çӳлерех хăпартма тăрăшаççĕ.

Вĕсен çине пăхатăн та, ирĕксĕрех çапла калатăн:

— Аслăран та аслă, пуринпĕн те сывăх çулпуçĕ Сталин ертсе çул кăтартса пыракан çĕршывăмăрта телейсĕр вырăн ниçта та çук, пур кĕтесре те илемлĕ пурнăç ешĕрсе тăрать.

Укерчĕк çинче: Шăхасан МТ Станцинчи токарь-стахановец комсомолец В. Я. Яковлев юлташ, вăл тракторсем юсас плана март уйăхĕнчех тултарнă.

К. Бабаев фото-ӳкерчĕкĕ.

Европăри тата Африкăри вăрçă

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ).

Германи командованийĕн сводкинче калана тăрăх, Германии Грецире çапăçакан войскисем Пелопоннес çурмаутравĕн кăнтăр пайĕ еннелле малалла кайса пыраççĕ. Германи войскисем Триполине туртса илнĕ (çурмаутравăн центральнăй пайĕнче). Германи авиацийĕ Греци шывĕсем çинче грузовой пароходсемпе сутăнлăй парохочĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Çавăн пекех Мальта утравĕ çинчи Ла-Валлетта порчĕ çине бомбăсем пăрахнă.

Англин имперски войскисем Грецирен урăх çĕре куçса каяççĕ.

Англипе Германи хушшинчи фронтра, ыран апрелĕн 29-мĕш тенĕ чух çĕрле, Германи авиацийĕ пуринчен ытларах Плимут портне атакăлать. Германи командованийĕн сводкинче калана тăрăх, портлă Грейт-Ярмут районĕ çине, Шотландин хĕвелтухăç сыранĕнчи пĕр завод çине, çавăн пекех тата Питерхед районĕнчи портсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Кунсăр пуçне, Кантăр-Хĕвеланăç Англири хăшпĕр аэродромсем çине те бомбăсем пăрахнă. Германи хĕçпăшаллă вăйăсен тинĕс çинчи операцийĕсем пулса пынă.

Апрелĕн 28-мĕшĕнче кăнтăрла, тесе пĕлтерет Рейтер агентстви, Англин «Стирлинг» йышши бомбардировщикĕсем Эмден çине пырса тапăннă, хула çине пысăк калибрлă бомбăсем пăрахнă. Çав кунах Англи самолечĕсен соединенийĕсем Голланди çыранĕн районĕнче Германин икĕ эсминецне атакăланă. Çав эсминецсем груз турттаракан суднăсен караванне хŭтлесе пынă пулнă. Франципе Голланди çыранĕ патĕнче Германи парохочĕсем çине бомбăсем пăрахнă, çав пароходсем путнă, тесе шутлаççĕ. Англин темиçе самолечĕ Мешпельри заводпа чугунçул склачĕ çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Ыран апрелĕн 29-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Германи линкорĕсем «Шарнгорст» тата «Гнейзенау» пытăнса тăракан Брест çине пырса тапăннă.

Çурçĕр Африкăри вăрçă ытларах тата ытларах хаярланса пырать. Англин Сывăхри Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕ кăларнă коммюникере калана тăрăх, Соллум районĕнче Германипе Итали отрячĕсем Египет чикки урлă каçнă, Египет территорийĕ çине 8—10 километр шалалла кĕнĕ тата, Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Соллума туртса илнĕ. Германи командованийĕн сводкинче çапла кăтартса панă: Германин Африкăри корпусĕн чаçĕсем Соллум районĕнче Англи чаçĕсем тăракан вырăна шала пырса кĕнĕ, вĕсене пысăк çухатусем кŭнĕ. Тобрукшăн пыракан кĕрешŭ те вайланнă. Германипе Итали самолечĕсем, тенĕ Итали сводкинче, Тобрукри укрепленисемпе артиллери позицийĕсем çине татах тепĕр хут бомбăсем пырса пăрахнă.

Бюллетень «Динст аус Дейчланд» Çурçĕр Африкăри фронтри событисем пирки çапла сырать: Киренаикăра Германи войскисем малалла хăвăрт кайма чарăннă, çакна ăна малтанах палăртса хунă план тăрăх тунă. Хальхи вăхăтра Тобрукшăн кĕрешŭ пырать, Германи чаçĕсем унтан пăрăнса иртсе кайма пулнă. Германи авиацийĕ Тобрукри порт сооруженийĕсем çине тата Англин унта тăракан карапĕсем çине вăйлăн бомбăсем пырăтыра пăрахать.

Германин Çурçĕр Африкăри малашнехи планĕсем çинчен, тет бюллетень, паллах ĕнтĕ, нимĕн калама та çук. Анчах та, нимĕн иккĕленмелли те çук, вĕсем пĕтĕм стратеги планĕсенчен тухса тăраççĕ. Событисем малалла мĕнле аталанса пырасси çине çак енчен пăхас пулать те ĕнтĕ.

Америкăри «ПМ» хаçатăн çар обозревателĕ çапла сырать: шанчăклă сведенисем тăрăх, нимĕçсем, Египет сыранĕ тăрăх Суэца хирĕç наступлени тунисĕр пуçне, Египетăн центральнăй пайĕ урлă çĕршывăн шалти районĕсем çинелле наступлени пуçласçĕ, тесе шутлаççĕ.

Хĕвелтухăç Африкăра, Абиссинире, активлă вăрçă ĕçĕсем пулман. Офи (Гавас) агентстви çапла пĕлтерет: Джибутирен илнĕ сведенисем тăрăх, де Голль генералăн войскисем, Англин моторизованнăй чаçĕсем пуläшнипе Франци Сомалийĕн кăнтăр чиккинче пуринчен ытларах Даунлех (Джибутипе Аддис-Абеба хушшинчи чугунçул çинчи станци) районĕнче пĕр çĕрелле пухăнаççĕ. Де Голль генералăн ытти чаçĕсем Зейлăра — Британи Сомалийĕн çурçĕр пайĕнче анса юлнă, тесе шутлаççĕ.

Апрелĕн 29-мĕш. (ТАСС).

Рузвельт Грецин США-ри фончĕсем çине секвестр хунă

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 28-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Рузвельт Грецин США-ри фончĕсем çине секвестр хунă — вĕсемпе усă курма чарнă. Официальнăй çынсем пĕлтернĕ тăрăх, Грецин США-ри фончĕсем 40—50 миллион доллар чухлĕ шутланаççĕ.

Финляндире нимĕç войскисем анса юлнă

ТАЛЛИН **(хамăр корреспондентран).** Кунта илнĕ шанчăклă та тĕрĕс сведенисем тăрăх, апрелĕн 28-мĕшĕнче Финляндири Або (Турку) портĕнче Германин транспортлă тăватă пароходчĕ пырса çитнĕ, вĕсем çинчен нимĕç войскисем—12.000 çынна яхăн — анса юлнă, хайсемпе пĕрле вĕсем вооруженипе, танксем, артиллери т. ыт. те илсе пынă. Апрелĕн 28-мĕшĕнче çак войскăсем Тампере хулине тухса каймă пуçланă. («Правда», апрелĕн 30-мĕш.)

Комсомолецсен Пĕтĕм Союзри эстафетисем

ЦК ВЛКСМ кăçалхи июль уйăхĕнче физкультурниксен Пĕтĕм Союзри III-мĕш кунĕ ячĕпе скоростной эстафетăсем иртторет. Вăл эстафетăсем икĕ маршрут тăрăх пулса иртмелле. Финиш Мускав хулинче пулать.

Пĕрремĕш маршрутăн старчĕ Груз республикинче — ĕççыннисен юратнă çулпуçĕ Сталин юлташ çуралнă Гори хулинче пулать.

Иккĕмĕш маршрут Ульяновскран — В. И. Ленин çуралнă хуларан пуçланать. Ку маршрута çичĕ республикăсемпе областсем, вăл шутра Чăваш республики те кĕрет. Эстафета маршручĕ пирĕн республикăра Куславккаран пуçланать, Çĕрпŭ, Канаш, Вăрнар, Çĕмĕрле урлă Пăрачкава çитет, пĕтĕмпе 262 километр каймалла.

Улатăрти чугунçул училищинче вĕренекенсем строевой занятире. А. Костин фото-ŭкерчĕкĕ.

Промышленность предприятийĕсене ĕçлеме каяççĕ

СЕНТЕРВĂРРИ. Юртакассинчи «Искра» колхозри çамрăксем промышленность предприятийĕсене ĕçлеме пысăк хаваслăхпа каяççĕ. Çак кунсенче Костромари торф кăларакан предприятине 9 çын кайма килĕшрĕç. Вĕсем пурте колхозра тăрăшса ĕçлекен çамрăксем.

Пирвайхи пароходсем

Атăл пăртан тасалса çитрĕ, пароходсем çŭреме пуçларĕç. Апрелĕн 30-мĕшĕнче, ирхине, «Володарский» ятлă пирвайхи пароход Шупашкар хулинче пулчĕ.

Вырăнти лини çинче те навигаци пуçланчĕ, трамвайсем çŭреме тытăнчĕç.

Енер кăнтăрла иртсен, анаталла «Память Разина» ятлă иккĕмĕш пароход иртсе кайрĕ.

Колхоз пахчинчи ĕçсем

Çуркуннехи сивĕ кунсем иртсе кайман-ха, анчах та пирĕн колхоз пахчинче хĕрŭллĕ ĕç пырать. Паринк рамисем таврашĕнче звеновод Шишкин юлташ тата звенори ытти колхозниксем ĕçленине кашни кунах курма пулать. Çурхи сивĕ çиллĕ кунсем Шишкин юлташа канлĕх памаççĕ. Парник рамисенче каçхине 5—7 градус кăна ăшă юлать. Паллах, вăл пахча-çимĕç калчисене ŭсме çителĕклĕ мар. Çакна пула кăнтăрла 3—4 сехет хушши рамăсене уçса парнике ăшăтаççĕ. Мĕн чухлĕ ăшă кирлине сăнасах тăраççĕ.

Эпир кăçалччен хĕл вăхăтĕнче симĕс сухан ŭстерсе сутманччĕ. Кăçал икĕ парникре симĕс сухан ŭстертĕмĕр. Колхоз çак кунсенче малтанхи пахча-çимĕç продукцине сутма тытăнчĕ.

Ир пулса çитекен купăста, помидор тата ытти пахча-çимĕç калчисем те парниксенче ăнăçлă ŭсеççĕ.

Пахча-çимĕç ŭстерес тĕлĕшпе ĕçлекен звено планлă задани илнĕ. Мĕнле культурăсем лартса ŭстермеллине тата пахча-çимĕçсен тухăçлăхĕ мĕнле пулмаллине звенори кашни колхозник лайăх пĕлет. Вĕсем çурхи ĕçсене начар мар хатĕрленсе кĕтсе илчĕç. Вăрлăхсем пурте кондицине лараççĕ. Вăрлăхлăх ŭстерме суйласа хăварнă купăста тунисемпе кишĕрсем те лайăх сыхланса тăраççĕ.

Пирĕн колхозра арбуз лартса ŭстересси лайăхлансах пырать. Кăçал звенори колхозниксем арбуза 15—20 кун маларах пухса илес задача лартрĕç.

И. ЕГОРОВ.

Çĕрпŭ районĕнчи «Красный бригадир» колхоз агрономĕ.

Шахматистсен матч-турнирĕн итогĕсем

ССР Союзĕн шахмат вăййинчи абсолютлă чемпионĕн званине илес тĕлĕшпе пулнă матч-турнирта апрелĕн 29-мĕшĕнче юлашки — çирĕмĕш тур пулнă. Ботвинникпе Смыслов 16-мĕш ходрах ничья тунă — нихăшĕ те çĕнтереймен. Çакă вăл пĕтĕм турнирти чи кĕске парти пулнă, вăл пурĕ те 12 минута кăна пынă.

Ботвинникпе Смыслов тĕлпулăвĕ мирлĕн вĕçленнĕ хыççăн, Керес Болеславскине выляса янă пулсан та, унăн турнирти положенийĕ улшăнман пулĕччĕ: вăл иккĕмĕш вырăна йышăнасси малтанах паллă пулнă. Болеславскипе Керес та 26-мĕш ходра ничья тунă.

Лилиентальăн, юлашки вырăнтан тухас тата ăна Бондаревскине «парас» тесен, Ростов гроссмейстрне мĕнле пулсан та çĕнтермелле пулнă. Лилиенталь пĕтĕм вăя хурса тăрăшнă, вăйăсламĕшĕнчех вăл пĕр пешка выляса илнĕ. 30-мĕш ходра Бондаревский парăннă.

Çапла ĕнтĕ Ботвинник 13,5 очко пухнă, Керес — 11 очко, Смыслов — 10 очко, Болеславский — 9 очко, Лилиенталь — 8,5 очко, Бондаревский — 8 очко. ССР Союзĕн шахмат вăййинчи абсолютлă чемпионĕн званине тивĕçлипех ĕнтĕ гроссмейстер Ботвинник çĕнтерсе илнĕ, вăл хăйĕн чи сывă конкурентĕнчен 2,5 очко нумайрах пухнă! Çакă вăл — аслă шахматистсен турнирĕнче нихăçан та пулман результатпа пĕрех.

* * *

Апрелĕн 29-мĕшĕнче физкультурăпа спорт ĕçĕсен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи комитечĕ ССР Союзĕн шахмат вăййинчи абсолютлă чемпионĕн званине илес тĕлĕшпе пулса иртнĕ матч-турнирăн итогĕсене çирĕплетнĕ.

Матч-турнирта çĕнтернĕ шахматиста—ССР Союзĕн гроссмейстерне М. Ботвиннике ССР Союзĕн шахмат вăййинчи 1941 çулти абсолютлă чемпионĕн званине панă. Çакăнпа пĕрлех ăна физкультурăпа спорт ĕçĕсен Пĕтĕм Союзри комитечĕн хисеплĕ грамотипе жетон парса наградăланă.

Иккĕмĕш вырăн йышăннă П. Кереса ССР Союзĕн шахмат вăййинчи гроссмейстерĕн званине панă. М. Ботвинникпе, П. Кереса тата турнирта виççĕмĕш вырăн йышăннă В. Смыслова укçан преми парса наградăланă. (ТАСС).

Майăн 1-мĕшĕнче

Çĕнĕ клубсем, кинотеатрсем, шкулсем

КИШИНЕВ, апрелĕн 29-мĕш. (ТАСС). Советлă Молдавири ĕççыннисем Майăн пĕрремĕшне культура строительствинчи тысăк çитĕнŭсемпе кĕтсе илеççĕ. Праздник тĕлне пикбез шкулĕсен пирвайхи массăллă выпускĕ пулать, çав шкулсенче хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсем 290.000 çын вĕренеççĕ.

Республикăри хуласемпе ялсенче çĕнĕ клубсем, кинотеатрсем тата культурăллă ытти ŭчрежденисем уçăлаççĕ. Бендеры хулинче Май уявĕ тĕлне çĕнĕрен тунă икĕ кинотеатр тата халăх творчествин çурчĕ ĕçлеме тытăнаççĕ, Мариенфельд ялĕнче — кинотеатр тата ачасен ясли, Талмазыра пысăк шкулпа клуб туса пĕтереççĕ. Кагул уездĕнчи ялсенче драма, хор, музыка тата ташă кружокĕсене организацилеççĕ.

* * *

ПЕТРОЗАВОДСК, апрелĕн 29-мĕш. (ТАСС). Май уявĕ тĕлне Какисалмире тата Пюхяярви поселокĕнче çĕнĕ кинотеатрсем уçăлаççĕ. Луохи районĕнчи Полярный Кругпа Энгозеро поселокĕсенче театрсем ĕçлеме пуçланă. Май уйăхĕнче Кемьре, Суоярвире, Салмире, Сортавалăра, Йокире тата Антреапа театрсене туса çитереççĕ.

„Чăваш Коммуни" хаçатăн çитес номерĕ майăн 4-мĕшĕнче тухать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Май уявне—пирĕн парнесем

КУСЛАВККА, апрелĕн 30-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Ĕççыннисен аслă уявне—Майăн пĕрремĕшне комбинат коллективĕ пысăк çĕнтерŭсемпе кĕтсе илчĕ. Апрельри производствăллă программăна ытлашшипех тултарнă. План тăрăх, пирĕн 58% пин тенкĕлĕх продукци туса кăлармалла пулнă, 624 пин тенкĕлĕх туса кăларнă, урăхла каласан, плана 105 процент тултарнă.

Типĕтекен цех (унăн начальникĕ Павлов юлташ) пуринчен малта пырать. Вăл кашни кунах çирĕп график тăрăх ĕçлесе пычĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, апрельри плана 132 процент тултарчĕ.

Май уявĕ умĕнхи ăмăртура стахановецсем ĕç тухăçлăхне нихăçанхинчен ытларах хăпартрĕç. Мотористсем — Спиридонов, Ростовцев юлташсем уйăхри нормăна 195-шер процент тултарчĕç. Ывăç каскалакан цехри стахановецсем—Кутузов, Бобров, Фадеева, Кирбитова, Сольников, Бычков юлташсем те апрельри нормăна 142—220 процента çити тултарчĕç.

Ф. АРТЕМЬЕВ.

Куславкка комбиначĕн директорĕ.

* * *

ÇЕМĔРЛЕ, апрелĕн 30-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Социализмлă ăмăртупа стахановла движенине кашни кунах вăйлатса пынипе пирĕн комбинат коллективĕ апрельри производствăллă программăна срокчен икĕ кун малтан тултарчĕ.

Енер тата паян комбинат апрельри плана ирттерсе тултарассишĕн ĕçлет. Çапла вара пирĕн комбинат планран ирттерсе 200 пин тенке яхăн е ытларах продукци туса кăларать.

Пуринчен малта — Кафтанников юлташ ертсе пыракан виççĕмĕш номерлĕ цех. Вăл апрельри плана виçĕмкунах 105 процент тултарнă. Çавăн пекех Шустов тата Данилов юлташсем ертсе пыракан цехсем те хăйсен планне чылай ирттерсе тултараççĕ.

Апрель уйăхĕнче комбинат ăнăçлăн ĕçлесе пычĕ темелле. Эпир талăклăх çирĕп график тăрăх ĕçлеме хăнăхса çитрĕмĕр. Чăн та, хăшпĕр кунсенче график пăсăлкаларĕ, анчах çак çитменлĕхсене пачах пĕтерме кирлĕ условисене туса çитертĕмĕр. Май уйăхĕнче татах та ăнăçлăрах ĕçлесе пыма детальсем, материалсем, кирлĕ япаласен куçакан запасне турăмăр.

М. ЕГОРОВ.

Çĕмĕрле комбиначĕн директорĕ.

* * *

КАНАШ, апрелĕн 30-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Уява хатĕрленнĕ май пирĕн завод Улатăрти паровозсем юсакан заводпа ăмăртăва тухрĕ. Ун чухне эпир хамăр çине конкретлă обязательствăсем илтĕмĕр.

Завод коллективĕ хăйĕн обязательствисене пурнăçа кĕртрĕ, апрельри производствăллă плана тултарчĕ. Планран ирттерсе 10 çĕнĕ вагон туса кăларнă, 15 вагон юсанă. Пĕтĕмĕшпе илсен, пур цехсем те производствăллă плана тултарчĕç.

В. ПОЗДНЯКОВ.

Канашри вагонсем юсакан завод начальникĕ.

* * *

УЛАТĂР, апрелĕн 30-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Май уявĕ умĕнхи ăмăртура илнĕ обязательствăсене пирĕн завод коллективĕ ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пычĕ.

Завод урапасем тăвас плана 170 процент, рессорсем тăвас плана 206 процент тултарчĕ, çавăн пекех чугун шăратассине те планпа пăхнинчен чылай ŭстернĕ.

Планран ирттерсе икĕ паровоз юсаса кăларнă. Унăн пуçне паровозсене ремонтра тăратмалли вăхăта та чылай чакарнă.

Ăмăртун малти речĕсенче производство командирĕсем — Уткин, Моиссева юлташсем пыраççĕ.

А. ЧУРАКОВ.

Улатăрти паровозсем юсакан заводăн начальникĕ.

* * *

ÇЕМĔРЛЕ, апрелĕн 30-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Эпир апрельри плана срокчен тултарса, планран ирттерсе 58 тонна экстракт туса кăларма обязательство илнĕччĕ.

Производствăллă программăна апрелĕн 27-мĕшĕнче тултартăмăр. Планран ирттерсе 58 тонна мар, 65 тонна экстракт туса кăлартăмăр. Чĕртавара перекетлес тĕлĕшпе те пысăк çитĕнŭ турăмăр. Пĕтĕмĕшпе 1200 кубометр чĕртавар перекетленĕ.

Паян рабочисемпе работницăсен, инженерно-технически работниксен савăнăçлă пухăвĕ пулать. Ку пухăва коллективри чи лайăх стахановецсене 16 пин тенкĕлĕх премисем паратăр.

И. ШУСТИН.

«Большевик» завод директорĕ.

* * *

СЕНТĔР. Районри финанс работникĕсем Май уявĕ тĕлне II-мĕш кварталти финанс планне 60 процентран кая мар тултарма обязательство илнĕччĕ. Халĕ çакна ăнăçлăн пурнăçлаççĕ. Пăшалукасси, Ярославка тата Урпаш ялсовечĕсем паянхи куна финанс планне 100 процент тултарчĕç.

* * *

Салат туса кăларакан предприяти апрельри плана 138 процент тултарчĕ. Çавăн пекех Пушкăртри «Тĕрлекен» артельре те ăмăрту сарăлсах пырать. Вĕсем пĕрремĕш кварталти производствăллă плана 110 процент тултарнă. Халĕ артель членĕсем хушшинче стахановецсен йышĕ ŭссех пырать. Стахановла ĕçлекенсем 12 çынна çитнĕ. Самушков юлташ плана 120 процент тултарнă.

П. ЯРГУНЬКИН.

М. М. Ботвинникпа калаçни

ССР Союзĕн шахмат вăййинчи абсолютлă чемпионĕ гроссмейстер-орденоносец М. М. Ботвинник ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне çапла пĕлтернĕ:

— Турнир таблицине çырса тултарнă, халĕ ĕнтĕ шахмат историйĕн юлашки çулĕсенчи чи чаплă ăмăртусенчен пĕрин итогĕсене тума пулать. Эпĕ хăюллăнах çапла калама пултаратăп: турнир участникĕсен вăйĕ енĕпе илсе пăхсан, 1938 çулта Амстердамра пулнă матч-турниртан кăна каярах тăрать, çав матч-турнирта сакăр гроссмейстертĕнчери чи вăйлă гроссмейстерсем выляннă. Халĕ вĕçленнĕ ăмăртăва мĕнле организацилени енчен илсе пăхсан, вăл мана тулляма тивнĕ мĕнпур ăмăртусенчен нумай лайăхрах пулчĕ.

Шахматистсен матч-турнирне массăллă зритель валли— шахмат вăййине юратакансем валли шутласа организацилеççĕ. Курма пынă çынсем, вăйă мĕнле пынине кăтартса паракан доскасем тăрăх сăнаса пырса, хăйсен шахмат вăййинчи квалификацине хăпартас ĕçре нумай усă илчĕç. Çакна пăлă тăвас пулать: ютçĕршывсенче пысăк ăмăртусене кафе залĕсенче ирттеççĕ, çавăн пек çĕрте обстановка хăех ĕнтĕ тĕплĕн шухăшласа выляма сахал пулăшать.

Халĕ вĕçленнĕ ăмăртун спорт тĕлĕшĕнчи результачĕсене хаклана чухне васкавлă выводсем тăвассинчен сыхланас пулать, вăл выводсене очкосене ахаль шута илнипе кăна тума юрамасть. Ăмăрту участникĕсен спорт тĕлĕшĕнчи итогĕсем мĕнле пулассине шахмат искусствипе тŭрех çыхăнса тăман нумай факторсенчен — сывлăх çителĕксĕр пулнинчен, çителĕксĕр хатĕрленнинчен тата ытти çăлтавсенчен те нумай килет. Çапла каласан нумай тĕрĕсрех пулĕ: ăмăрту участникĕсем уллăшĕ те пĕр евĕрлех вăйлă выляççĕ. Вĕсенчен халĕ юлашки вырăнсене йышăннисем çитес ăмăртура, нимĕн иккĕленмелли те çук, пĕрремĕш вырăнна тухма пултараççĕ.

Гроссмейстер Кересăн вăйĕ пирки иккĕленме тивмест. Вăл — питех те ĕста вылякан, партине лăпкă маневрсен çулĕ çине илсе тухма тăрăшакан позиционнăй шахматист. Эпĕ иккĕленместĕп, Керес ытларах тĕплĕн хатĕрленнĕ пулсан, татах та лайăхрах результатсем кăтартнă пулĕччĕ. Керес пысăк опычĕ турнир вĕçĕнче пĕтĕмĕшпех палăрчĕ. Юлашки турсенче вăл хăйĕн турнирти положенине чылай лайăхлатрĕ.

Ăмăртун чи çамрăк икĕ участникĕ—Смысловпа Болеславский — калама çук талантлă мастерсем. Турнирти юлашки кунсем кăтартса панă тăрăх, Смыслов — питех те çине тăрса вылякан шахматист. Çамрăк москвич выляса янă пекех туйăнса тăракан виçĕ партире 1,5 очко пухрĕ. Вăл лайăх тата çине тăрса вылять, анчах та унăн позициллĕ кĕрешŭри опыт çителĕксĕр-ха. Болеславский хăйĕн вăйăин стилĕпе каштах Капабланкăна аса илтерет — вăл та çавăн пекех уçăмлăн палăрса тăракан позицисем панелле туртăнать. Болеславскин пĕр çитменлĕхрен — дебют репертуарĕ пĕр евĕрлĕ пулнинчен хăтăлас пулать. Кунсăр пуçне унăн партисене вĕçлес тĕлĕшпе тĕплĕн ĕçлес пулать. Ку тĕлĕшрен Болеславский вăйсăр-ха.

Бондаревский — пирĕн ытларах талантлă шахматистсенчен пĕри. Унăн тĕп вăйĕ — вариантсене питех те тĕплĕн тата тĕрĕс шутласа тунинче. Ростов гроссмейстерĕ кашни партирех пĕтĕм вăя хурса вылярĕ. Хăйĕн сывлăхĕ лайăх чухне Бондаревский паха результатсем парать. Турнир вĕçĕнче вăл ывăнса çитрĕ пулас, çакă вăл ăмăртусен итогĕсенче палăрчĕ.

Пирĕн юлашки çулсенче гроссмейстер Лилиентальăн вăйăри ăсталăхĕ чылай ŭснине пĕр хут çеç мар паллартунă. Иккĕленмелли çук, Лилиенталь лайăхрах спортивнăй формăра пулнă пулсан, вăл нумай пахарах результатсем панă пулĕччĕ.

Манăн çитĕнŭ, пуринчен малтан, спортивнăй форма лайăх пулнинчен тата тĕплĕн хатĕрленнинчен килчĕ.

Турнир дебютсен теорийĕ валли те, эндшпильсен теорийĕ валли те хаклă, интереслă япаласем нумай пачĕ. Хамăн партисенчен эпĕ Смысловпа виçĕмĕш кругра выляна партие паллă тăватăп. Çак партире питех те нумай вăй хума тиврĕ, унта уйрăм йăнăшсем пулнă пулсан та, вăл хăйне майлă, интереслă парти пулчĕ.

Турнир вĕçленчĕ. Вăл пирĕн çĕршывра шахмат искусстви мĕнтери çŭле аталанса çĕкленнине çĕнĕрен кăтартса панă.

Майăн пĕрремĕшĕнчи праздниксем хыççăн эпĕ Ленинграда тавăрăнатăп, унта М. И. Калинин ячĕпе тăракан Политехнически институтра хамăн научнăй ĕçсене малалла тума тытăнатăп.

Апрелĕн 29-мĕш. (ТАСС).

Театр уяв кунĕсенче

Чăвашсен Государство Академи театрĕ Шупашкар хулинчи ĕççыннисем валли уяв кунĕсенче постановкăсем лартас парать.

Майăн 1-мĕшĕнче театрта Сталинла премин лауреачĕ Крапива çырнă «Кто смеется последний» ятлă спектакль лартса параççĕ. Спектакле художество енĕпе К. И. Иванов юлташ ертсе пырать.

Майăн 2-мĕшпе 3-мĕш кунĕсенче иккшер спектакль (кăнтăрла тата каçхине) пулать. Майăн 2-мĕшĕнче «Мелкие ксзыри», майăн 3-мĕшĕнче «Коварство и любовь» пьесăсене лартса параççĕ.

Атăл çинче

Апрелĕн 29-мĕшĕнче кăнтăрла икĕ сехетрен пуçласа Атăл шывĕ каллех хушăнма тытăннă. Шыв горизончĕ — 623 сантиметр. Сывлăшри температура — 3 градус ăшă.

Шахматистсен матч-турнирĕн участникĕсем (сулахайран сылтăмалла): çŭлте—А. Лилиенталь (Мускав), П. Керес (Тарту), М. Ботвинник (Ленинград), аялта — И. Бондаревский (Ростов), В. Смыслов (Мускав) тата И. Болеславский (Днепропетровск). ТАСС фото-ŭкерчĕкĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн —4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн—2—30, «Ĕçхĕрăмĕ» журналăн—3—23, «Ленин çулĕпе» журналăн—0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 3356.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 227. ф. б. 58×84 п. л.